ПЕТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

ВКП(б) Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1952 çул
Майăн 23
ЭРНЕКУН
№ 101 (8753)
Хакĕ 20 пус.
35-мĕш çул тухать.

Паянхи номерте:

СТАЛИН ЮЛТАШ ПАТНЕ ЯНА ÇЫРУРА ИЛНĔ ОБЯЗАТЕЛЬСТВĂСЕНЕ ЧЫСЛĂН ПУРНĂÇЛАССИШĔН. Мордва тата Мари республикисемпе пыракан социализмлă ăмăртура мала тухасси—Чăваш республикинчи ялхуçалăх ĕçченĕсен чыслă тивĕçĕ (1 стр.).
ПУÇЛАМĂШ ПАРТОРГАНИЗАЦИСЕН ĔÇ ОПЫТĔНЧЕН. А. Антонова.—Агитколлектив ĕçне организацилле ертсе пырасси (2 стр.).
Чăвашоблпрофсоветăн черетлĕ пленумĕ (2 стр.).
ШКУЛСЕНЧИ ЭКЗАМЕНСЕМ. И. Волков.—Çитменлĕхсене халех пĕтермелле (2 стр.).
СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ (2 стр.).
Н. Пушкин.—Саванăç. Очерк (3 стр.).
Асран кайми кинофильм. Чăвашла куçарнă «Чапаев» кинофильма кăтартма пуçларĕç (3 стр.).
К. Евлампьев.—Педагогика институчĕ çĕнĕ вĕренÿ çулĕ умĕн (3 стр.).
Халăх демократи çĕршывĕсенче (4 стр.).
Тĕнчери общественность Америка агрессорĕсен тискер ĕçĕсене хирĕç протестлет (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).
Мире сыхлас ыйтупа Пĕтĕм Бирмăри конгресс пулса иртнĕ (4 стр.).

Актив—вырăнти Советсен тĕрекĕ

Хуçалăхпа культура строительстви тĕлĕшпе тăракан задачăсене ăнăçлă пурнăçлама май паракан тĕп условисенчен пĕри вăл—вырăнти Совет депутачĕсен ĕçри активлăхне ÿстересси, массăсене Советсен ĕçне анлă хутшăнтарасси пулса тăрать. Вырăнти Советсен организаторла ролĕ çулсерен ÿсе пырать. Советсемпе массăсем хушшинчи çыхăну çирĕпленет. Вырăнти Советсем хăйсен пултарулăхне, хастарлăхне, ĕçсынисем хушшинче ĕçлесси не вăйлатрĕç, организацилле-массăллă ĕçе депутатсене, совет активисчĕсене хутшăнтарасси нумай лайăхланчĕ.

Иртнĕ çулта Шупашкар хула Совечĕ хăйĕн массăсем хушшинчи ĕçне чылай лайăхлатнă. Çак ĕç кăçал та анлă сарăлса пырать. Хула Совечĕ депутатсем, яланхи комиссисем, урам комитечĕсем пулăшнипе благоустройство ĕçне хулари общественноçа анлă хутшăнтарать. Хула урамĕсене çĕршер йывăç лартассĕ, çулсене тĕпрен юсассĕ, скверсем тăвассĕ. Хула Совет исполкомĕ депутатсен тата активăн сĕнĕвĕсене куллен пурнăçласа пырать.

Республикăри чылай ял Совечĕсем хăйсен кулленхи ĕçĕсене ялти ĕçсынисен массисене активлă хутшăнтарса пырассĕ. Илĕпĕр, Етĕрне районĕнчи Стрелецки ял Советне, Ку ял Совечĕ нумайранпа ĕнтĕ Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне тытса тăрать. Хуçалăхпа культура строительствинче тăракан задачăсене ял Совечĕн сессийĕсенче, исполкомра тăтăшах сÿтсе явассĕ, йышăннă решенисем çинчен ял сынинсене вăхăтра пĕлтерессĕ. Ял Совечĕн яланхи комиссийĕсем пуçарулă ĕçлессĕ. Кунта вiçĕ комисси тунă. Кашни комисси хăйĕн тавра çирĕп актив пĕрлештерсе тăрать. Активистсем хăйсен хастарлăхĕпе ял сыннисене ĕçре ÿсĕмсем тума хавхалантарассĕ, ял Советне куллен пулăшассĕ. Комисси членĕсем колхозра, шкулта, вулав çуртĕнче ĕçсем мĕнле пынине тĕрĕслессĕ, тĕрĕслев итогĕсем тăрăх хăйсен сĕнĕвĕсене ял Советне тăратассĕ, сессисенче çак ыйтусем тăрăх содокладсем тăвассĕ, ял Совечĕн решенийĕсене мĕнле пурнăçланине куллен тĕрĕслесе тăрассĕ.

Ял Совечĕ хăйĕн организацилле-массăллă ĕçне лайăх йĕркелени колхоз производствинче сĕнĕрен те сĕнĕ çитĕнÿсем тума пулăшать. Ял Советне кĕрекен Буденный ячĕпе тăракан колхоз районти малта пыракан колхозсенчен пĕри шутланать. Вăл иртнĕ çулта тухăçлă тырпул туса илнĕ, государствăна вылăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли обязательствăсене ăнăçлă пурнăçланă. Колхоз обществăллă вылăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхне ÿстермелли плана тултарнă. Колхоз çураки ĕçĕсене те лайăх туса пырать.

Ял Совечĕ финанс планне тултарас тĕлĕшпе те пуçарулă ĕçлет. Иртнĕ çулхи бюджета тупăшсемпе расходсем енĕпе те чыслă пурнăçланă. Пуян та культурăллă пурăнассĕ Стрелецки ял Советĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем.

Улатăр районĕнчи Иваньково-Удельновски ял Совечĕ, Пăрачкав районĕнчи Пăрачкав ял Совечĕ, Сĕнтĕр районĕнчи Кăпас ял Совечĕ, Чкаловски районĕнчи Анат Туçа ял Совечĕ хуçалăхпа культура строительствинче палăрмалла пысăк ÿсĕмсем тăвассĕ. Ку ял Совечĕсем кăçалхи пĕррĕмĕш кварталта социализмлă ăмăртура малти вырăна тухнă, вĕсем Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулнă.

Анчах та республикăри хăшпĕр вырăнти Советсен исполкомĕсем хăйсен ĕçĕсене активпа депутатсем çине таянса тумассĕ, вĕсен ĕçри активлăхĕпе хастарлăхне массăсем хушшинче анлă сараççине тивĕçлипе хакламассĕ. Ку тĕлĕшпе уйрăмах Хĕрлĕ Чутай, Красноармейски райсовет исполкомĕсен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем палăрассĕ. Çак райсовет исполкомĕсем районти ял Советсен яланхи комиссийĕсен ĕçне кирлĕ пек ертсе пымассĕ. Çавна пула та ĕнтĕ асăннă районсенчи ял Совечĕсенчен чылайăшĕ ĕçсынисен массисене организацилле ĕçе явăçтарман. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Кÿпеш ял Совечĕ комиссисен ĕçĕсемпе пачах интересленмест, комиссисем хут çинче кăна шутланассĕ, вĕсен ĕç планĕ çук. Ял Совечĕ депутатсем хăйсен суйлавçисем умĕнче отчетлă докладсем тăвассине тивĕçлипе йĕркелемен. Ял Совет исполкомĕ хăйĕн тавра çирĕп актив пĕтĕçтерес, массăсем хушшинчи сыхăнăва çирĕплетес, вĕсен творчествăллă пултарулăхĕпе пуçарулăхĕ çине таянса ĕçлес вырăнне хуçалăхпа культура ыйтăвĕсене хăй тĕллĕн татса пама пăхать. Паллах ĕнтĕ, организацилле ĕçе ячĕшĕн, çиелтен кăна туса пыни ял Совечĕн ĕçĕнче чылай чăрмав кÿрет. Красноармейски районĕнчи Супар ял Совечĕ те хăйĕн кулленхи ĕçне ялти актива кирлĕ пек хутшăнтармасть. Ял Совет территорине кĕрекен колхоз ялхуçалăх ĕçĕсенче юлса пырать, шкул çулне çитнĕ ачасене вĕренĕве пурне те хутшăнтарман, фельдшер пункчĕ чăтма çук япăх ĕçлет. Анчах Супар ял Совечĕ çак çитменлĕхсемпе лăпланса ларать, вĕсене пĕтерес ĕç çине тимсĕр пăхать.

Советсен ĕçне ĕçсынисен йышлă массисене активлă хутшăнтарасси, вырăнти Советсен депутачĕсемпе актива халăх хушшинче ĕçлеме вĕрентесси—вырăнти Совет исполкомĕсен хальхи вăхăтра тăракан чыслă та ответлă задачисенчен пĕри пулса тăрать. Паллах ĕнтĕ, массăсем хушшинче ĕçлесси, активистсене ĕçре вĕрентсе çитĕнтересси çăмăл ĕç мар. Кунта пысăк чăтăмлăх, большевикла принциплă, ĕçре хастарлă та пултарулă пулни, кулленхи пурнăçра çĕннине, ĕçри пур лайăх енсене малалла аталантарса пыма пĕлни кирлĕ. Çакă вăл вырăнти Советсем çине пысăк ответлăх хурать.

Опыт çакна кăтартса парать: Советсен ĕçне ĕçсынни массисене анлă хутшăнтарсан, хуçалăхпа культура строительствинчи кирек мĕнле ĕçе те вăхăтра тата ăнăçлă татса пама пулать. Актив вырăнти Советсен ĕçне вăйлатма пулăшакан чи хăватлă вăй пулса тăрать.

Хăшпĕр çĕрте вырăнти Советсен исполкомĕсем сессисемпе ларусене хатĕрлес ĕçе исполкомра ĕçлекенсемсĕр пуçне ытти депутатсене тата актива хутшăнтармассĕ, йышăннă решенисем çинчен ĕçсынисене вăхăтра пĕлтермессĕ. Паллах ĕнтĕ, çакăн хыççăн решенисене пурнăçласси те япăх пулса пырать. Апла ан пултăр тесен, исполкомăн кун йĕркинче тăракан ыйтăва хатĕрлеме депутатсемпе яланхи комиссисене хутшăнтармалла, пĕр-пĕр ыйту тăрăх мĕнле решени йышăнсан лайăхрах пуласси çинчен ĕçсынисемпе хăйсемпе тĕплĕн канашласа пăхмалла, вĕсен сĕнĕвĕсене шута илмелле.

Халăх—совет активне ÿсме пулăшакан чи хăватлă вăй. Çавăнпа та ĕнтĕ аслă сулпуçăмăр Сталин юлташ пире халăх массисемпе яланах тачă çыхăну тытма, Советсен ĕçне массăсене анлă хутшăнтарма, çав вăхăтрах вĕсенчен куллен вĕренсе пыма хушать.

Вырăнти Советсене хăйсен ĕçне большевикла тимлĕхпе туса пыма вĕрентесси, массăсем хушшинчи çыхăнăва çирĕплетме пулăшасси—районсемпе хула Совет исполкомĕсен чыслă тивĕçĕ.

Большевиксен партийĕпе Совет правительстви хуçалăхпа культура строительстви енĕпе пирĕн республика умне пысăк та ответлă задачăсем лартнă. Çак задачăсене ăнăçлă пурнăçлассишĕн пыракан социализмлă ăмăртăва ĕçсынисем хушшинче анлă сарасси—вырăнти Советсен кулленхи ĕçĕ.

Цимлянски гидроузела ĕçе ярас умĕн

ЦИМЛЯНСКИ РАБОЧИ ПОСЕЛОК, майăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Цимлянски водохранилищинчи шыв тулсах пырать. Халĕ шыв 1.400 тăваткал километра яхăн сарăлса выртать. Шыв çаплах тулса пырать, халĕ шыв шайĕ пĕверен çÿлерех хăпарнă. Ытлашши тулакан шыва Дон тăрăх пĕверен анаталла яма тытăннă.

Пĕвепе юнашарах гидростанци çуртĕнче шыв камерăран турбина урапин çунаттисем çине пырса çапăнать. Агрегата нумай пулмасть ĕçлеттерсе пăхнă пулнă, халĕ вăл калăех ĕçлеме тытăннă. Турбина хăйне хăй ăшăтать, çапла вара генератор изоляцийĕ типсе пырать. Изоляци типсе çитсен, машинăна пысăкрах напряженипе ĕçлеттерсе пăхассĕ. Ун хыççăн вăл ĕçлеме пуçлать. Пĕррĕмĕш агрегат икĕмĕш кун ĕçлет ĕнтĕ. Пур механизмсем те аван ĕçлессĕ.

Сывăх кунсенчех Цимлянски гидроэлектростанцийĕ электричество токĕ пама тытăнать.

Атăлпа Дон хушшинчи канал çинче

ДОН ÇИНЧИ КАЛАЧ, майăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Атăлпа Дон хушшинчи канала тунă çĕрте хĕрÿллĕ кунсем çитрĕç. Дон шывĕ Карповски, Береславски водохранилищĕсене тата каналăн çав водохранилищĕсемпе çыхăнса тăракан участокĕсене тулнă. Халĕ навигаци пуçлама хатĕрленес тĕлĕшпе юлашки ĕçсене тăвассĕ.

Паян комисси 9-мĕш шлюз патне çул вăчен чымалли участока йышăннă. Варваровски гидроузелăн вуннăмĕш шлюзне туса çитерессĕ.

Атăлпа Дон хушшинчи çулĕ вырăнта, шыв çиккинче, утакан экскаваторпа паян юлашки тăпрана чавса кăларассĕ. Çав экскаватор пĕрре ăсса илнĕ чухне 14 кубометр тăпра çĕклет. Экскаваторпа ĕçлекен экипаж (ăна Усков коммунист ертсе пырать) канал тунă çĕрте виçĕ миллион кубометра яхăн çĕр чавса кăларнă.

Сталин юлташ патне янă çырура илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçлассишĕн

Мордва тата Мари республикисемпе пыракан социализмлă ăмăртура мала тухасси—Чăваш республикинчи ялхуçалăх ĕçченĕсен чыслă тивĕçĕ

* * *

ЧĂВАШ АССР-ĕнчи КОЛХОЗСЕНЧЕ ÇУРАКИ ĔÇĔСЕМ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

Майăн 20-мĕшĕ тĕлне (процентпа)

РАЙОНÇЕМ	Çуртри акнă	Кантăрпа йĕтĕн акнă	Çĕрулми лартнă	Тымарçимĕç акнă
Чкаловски	96,8	70,0	44,4	119,0
Красноармейски	95,2	34,2	62,1	100,3
Комсомольски	92,7	42,5	62,3	112,0
Тăвай	92,0	70,3	39,8	97,0
Муркаш	91,4	14,8	43,5	86,0
Елчĕк	89,1	80,5	35,9	94,6
Етĕрне	87,7	50,7	69,6	100,0
Первомайски	87,7	63,8	44,4	95,3
Чурачăк	86,1	6,3	30,1	98,2
Советски	85,6	22,0	38,9	70,5
Калинино	85,1	36,6	35,0	79,2
Вăрмар	84,9	22,3	16,5	100,0
Шăмăршă	84,3	34,5	28,4	61,5
Кувакино	84,1	65,0	31,1	110,6
Вăрнар	83,2	20,4	29,4	100,0
Канаш	82,0	28,0	5,5	94,2
Йĕпреç	81,9	51,8	28,8	92,6
Элĕк	81,5	9,2	32,8	70,0
Çĕмĕрле	80,1	40,2	18,0	85,3
Сĕнтĕр	77,8	4,6	28,0	40,4
Шăхасан	77,6	13,3	21,8	103,0
Пăрачкав	76,2	54,4	32,3	100,0
Улатăр	73,6	51,2	8,0	72,6
Сĕнтĕрвăрри	73,0	9,3	17,5	52,3
Çĕрпÿ	72,3	—	14,2	64,5
Хĕрлĕ Чутай	71,8	14,3	29,1	44,6
Ишлей	71,1	1,4	20,9	75,0
Октябрьски	70,8	8,5	10,7	48,8
Куславкка	70,3	10,6	1,4	46,6
Шупашкар	70,0	4,5	6,9	76,9

Вăрахăн акаççĕ

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Пĕрлешсе пысăкланнă «Свет» колхоз çуракине апрелĕн 30-мĕшĕнче тухнă. Апла пулин те çураки планне çурри ытларах кăна тултарнă. Вăл шутран МТС-ăн М. Падюков юлташ ертсе пыракан трактор бригади виçĕ кун хушшинче 70 гектар культиваци туса ретлĕ майпа акнă.

Колхозăн 420 гектар сухаласа акмалла. МТС-ăн колхоза договор тăрăх 90 гектар сухаласа, 150 гектар культиваци туса, 260 гектар сеялкăпа акса памалла. Çураки ĕçĕсене колхозра 20 кун хушшинче пĕтерме палăртнă. Çак факт ĕнтĕ колхоз правленийĕ çураки ĕçĕсене ирттерме начар хатĕрленнине кăтартса парать.

Ĕç планĕ туман пирки колхозниксен ĕçне тĕрĕс йĕркелеймессĕ. Суха-сÿре тăвакансем тата тырă акакансемпе вăрлăх турттаракансем ĕçе ирхине 9 сехетре кăна тухассĕ, ĕçрен те ирех таврăнассĕ. Уй-хир бригадирĕсем пулса ĕçлекен И. Железнов, А. Кузюков, И. Федоров, Н. Федорова юлташсем акасуха ĕçĕсем мĕнле пулса пынипе интересленмессĕ, колхозниксен кулленхи ĕçĕсене тĕрĕслесе йышăнмассĕ. Правлени председателĕ И. Попов юлташ бригадăсен ĕçĕсене тĕрĕслемест. Вăл çуракине тухнăранпа уй-хир бригадисем тунă ĕçсене пĕрре те актпа йышăнман. Колхоз тырăсене алăпа акать, мĕншĕн тесен сеялкăсем юсавсăр.

Уй-хир ĕçĕсем вăраха тăсăлни колхозниксем хушшинче агитацилле-массăллă ĕçе туса пыманнинчен те килет. Парторганизаци бригадăсем çумне çирĕплетнĕ агитаторсем тата боевой листок редакторĕсем хăйсен тивĕçне пурнăçламассĕ. Вĕсем бригадăсенче пĕр калаçу та ирттермен, пĕр номер боевой листок та кăларман. Кунта кăтарту хăми те çук, хаçат витрини те туман. Пуçламăш парторганизаци секретарĕ Д. Дадюков юлташ çураки пуçланнăранпа хире тухса курман, коммунистсене ĕçе явăçтарман.

Ял Совечĕ те (председателĕ А. Мазуркин юлташ) колхозра çураки ĕçĕсем мĕнле пынипе интересленмест.

В. ЧОБАЙКИН.

Тупăш ÿссе пырать

ЙĔПРЕÇ. «Путиловка» колхоз членĕсем кашни гектартан 18-шар центнер тĕштырă туса илессишĕн çине тăрса кĕрешессĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем тырпула, вылăх апачĕ тумалли тата техникăллă культурăсене майăн 10-мĕшĕнче пĕтĕмпех акса пĕтерчĕç. Халĕ махорка лартма, хуратул акма хатĕрленессĕ.

* * *

Виçĕ республика ăмăртăвĕ

Колхозсемпе МТС-сем майăн 20-мĕшĕ тĕлне ялхуçалăх ĕçĕсен планне çакăн чухлĕ тултарнă (процентпа):

	Мордва АССР-ĕ	Мари АССР-ĕ	Чăваш АССР-ĕ
Çуртри акнă	82,8	57,1	82,6
Вăл шутран: тулă	110,9	92,0	107,0
кантăр	67,9	—	25,5
йĕтĕн	—	11,5	49,8
Пĕр çул ÿсекен курăксем	76,4	18,0	80,5
Нумай çул ÿсекен курăксем	103,2	88,4	119,9
Тымарçимĕçсем	77,2	19,5	83,6
Силос тумалли культурăсем	59,4	24,7	86,2
Çĕрулми лартнă	42,1	3,3	29,3
Кĕрхи тырă калчисене апат панă	93,5	72,8	77,6
МТС тракторĕсемпе мĕнпур ĕçсем çакăн чухлĕ тунă	22,7	13,4	19,6
15 лаша вăйлĕ тракторпа çакăн чухлĕ ĕç тунă (гектарпа)	107,0	64,8	86,0

Вылăх апачĕшĕн халĕ кĕрешмелле

КОМСОМОЛЬСКИ. Сталин ячĕпе тăракан колхоз картишне кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче уй-хиртен ĕç лашисене илсе килчĕç. Вĕсенчен чылайăшĕ начарланса çитнĕ.

— Апат çителĕксĕр,—йывăррăн сывласа илчĕ пĕр колхозникĕ,—пĕр тĕслĕ апат çеç, ирĕксĕр начарланассĕ.

Ытти вылăх-чĕрлĕхĕсене пăхсан, колхоз сĕтеклĕ апатсем çитменнипе тата ытларах тертленни курăнать. 1951 çулта артель курăксем тата тымарçимĕçсем акса тумалли плана тултараймана, çавăн пирки тĕштырă нумай расходлама тивнĕ. Тен, колхоз правленийĕ, пĕлтĕрхи йăнăшсене аса илсе, кăçал обществăллă вылăх-чĕрлĕх валли сĕтеклĕ апатсем нумайрах акса тума тăрăшать пулĕ? Çук. Правлени, чи малтан, унăн председателĕ И. Николаев юлташ, иртнĕ çулхи йăнăшсене ытла та час манса кайнă.

Государство планĕ тăрăх колхозăн пĕр çул ÿсекен курăксем 30 гектар, силос тумалли культурăсем 10 гектар акмалла. Кунта вика акмалли çĕр участокне майăн 14-мĕшĕнче çеç сухалама тытăннă.

— Ку çĕр çинче сирĕн кĕркунне ыраш акса хăвармалла-çке, халĕ акакан вика мĕнле ÿссе ĕлкĕрĕ?

— Ĕлкĕреймесен силос хывма пухса илĕпĕр,— лăпкă кăмăлпа ответлет Николаев юлташ.

— Силос культурисем мĕншĕн акмастăр?

— Ĕнер çеç Канашри хатĕрлев пунктне кайса килтĕм, анчах вăрлăх тупса пулмарĕ,—ответлет председатель.

Комсомольски районĕнчи колхозсене силос тумалли культурăсен вăрлăхне иквиçĕ эрне каярах уйăрса панă. Сталин ячĕпе тăракан колхоз правленийĕ çав вăрлăха та вăхăтра кайса илмен. Обществăллă вылăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстересси çине сÿрĕккĕн пăхнине пула кунта кăçал та сĕтеклĕ апатсăр тăрса юлма пултарассĕ.

Вылăх апачĕшĕн çине тăрса кĕрешменнине Сталин ячĕпе тăракан колхозра çеç мар, ыттисенче те курма пулать. Мичурин ячĕпе тăракан колхоз вылăхсем валли сĕтеклĕ апат çитменнипе иртнĕ хĕлле пысăк йывăрлăхсем тÿссе иртерчĕ. Лашасемпе ĕнесем тата çамрăк вылăхсем валли утă туянма кăна 20 пин тенкĕ расходланă. Колхозра сĕтеклĕ апатсем акса тума лайăх условисем пур. Анчах правлени вăхăтра мерă йышăнманнипе майăн 14-мĕшĕ тĕлне вылăх кăшманĕ те, силос культурисем те акман.

Ялхуçалăх работникĕсен районти канашлăвĕнче кăçал пур колхозсенче те обществăллă вылăх-чĕрлĕх валли сĕтеклĕ апатсем ытлăн-çитлĕн акса çитĕнтерес, çавна май вылăхсен тухăçлăхне татăклăнах ÿстерес задача лартрĕç. Кун хыççăн пур колхозсем те уйрăм обязательствăсем илчĕç. Анчах хăшпĕр колхозсенче çав обязательствăсем хут çинче тăрса юлассĕ. Маленков ячĕпе тăракан, «Красное Сормово», «Правда» «Алга» колхозсем пĕр çул ÿсекен курăксем акмалли плана çурри çеç тултарнă, силос тума нимскер те акман.

— Çак кунсенчех пĕтĕм районĕпе план тулать,—тет районти ялхуçалăх пайĕн заведующийĕ В. Лаптев юлташ.

Кун пирки иккеленмелли çук. Çав вăхăтрах акă мĕн каламалла: тымарçимĕçсене тата пĕр çул ÿсекен курăксене чылай çĕр лаптăкĕ çине кая юлса акаççĕ пулсан, вĕсене пăхса çитĕнтересси çине халĕ уйрăмах тимлĕн пăхма тивет.

Нумай колхозсем кĕртыррисен калчисене апат пачĕç, суртри акмалли участоксене вырăнти тата минераллă удобренисем тăкрĕç. Çав вăхăтрах тымарçимĕçсемпе курăксем акнă участоксем çине ытла та сахал пăхассĕ. «Гвардеец» колхозра тымарçимĕçсене кĕрхи сĕртме туман, удобренисемпе çемçетмен начар участок çине акнă. Паллă ĕнтĕ, кунта пысăк тухăçлă тымарçимĕç ÿссе çитĕнессе кĕтме çук. Колхоз правленийĕ шăтса тухакан калчасене апат пама та хатĕрленмест.

Кĕтне шывĕ тăрăх вырнаçнă чылай колхозсен пысăк çарансем пур, унта çулленех тухăçлă утă пухса илме пулать. Çав вăхăтрах юлашки çулсенче утă тухăçлăхĕ чакни палăрать. Райсовет исполкомĕ Кĕтне тăрăхĕнчи колхозсене кăçал 2.080 гектар çинчи çарансене тата вылăх çÿретмелли вырăнсене юсаса сĕнетме план панă. Ялхуçалăх специалисчĕсем çав план мĕнле пурнăçланнине вăхăтра тĕрĕслесе тăмарĕç. Паянхи куна пĕр колхоз та çарансене сĕнетсе лайăхлатма тытăнман. «Красный маяк» колхозра çарана юсаса сĕнетме нумай ĕç туни те кирлĕ мар, тĕмескесене çеç ватса тухмалла. Эрне хыççăн эрне иртет, çаран çинчен шухăшлакан пĕр çын та çук.

Районти колхозсем кăçал обществăллă вылăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстерме пысăк обязательствăсем йышăнчĕç. Çав обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçлассине паянхи ĕçсем, уйрăмах вылăхсем валли лайăх апат пăхса çитĕнтерме тăрăшни татса парать. Тымарçимĕçсен, курăксен, çарансен тухăçлăхне ÿстерме халех тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла.

«Коммунизм ялавĕ» хаçат бригади: **А. ЕРЕМЕЕВ, П. МАНЗУРКИН, Н. ВОЛКОВ.**

Плана ирттерсе тултараççĕ

ЧКАЛОВСКИ. Районти чылай колхозсем çураки ĕçĕсене вĕçлесе пыраççĕ. Сталин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕ тырпул акмалли плана майăн 15-мĕшĕ тĕлне иртерсе тултарчĕ. «Правда», «Дружба», Киров ячĕпе, Калинин ячĕпе тăракан, «Восток, «Пламя Октября», «Герой» тата ытти колхозсем те пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсем акмалли плана иртерсе тултарчĕç. Киров ячĕпе тăракан колхоз техникăллă культурăсем акса пĕтерчĕ.

Чылай колхозсем техникăллă тата ытти хаклă йышши культурăсене, иртнĕ çулхисемпе танлаштарсан, ытларах акса хăвараççĕ, вылăх-чĕрлĕх валли апат туса илмелли çĕр лаптăкне ÿстереççĕ. Калинин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕн членĕсем пĕр çул ÿсекен курăксем 62 гектар акнă, «Дружба» тата ытти колхозсенче те пĕр çул ÿсекен курăксем акмалли заданине иртерсе тултарнă.

Çĕрулми лартса пĕтерчĕ

ШĂХАСАН. Ушанарти Калинин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем кăçал ир акакан культурăсемпе пăрçа йышши культурăсене пысăк пахалăхпа тата кĕске вăхăтра акса хăварчĕç. Кĕрхи тырăсене апат парасси те ăнăçлăн иртрĕ.

Çак кунсенче колхозниксем çĕрулми лартас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлерĕç. Яровизациленĕ вăрлăхпа 50 гектар çĕрулми лартса хăварчĕç. Вăл шутрам тĕмĕн-тĕмĕн тăваткал майпа чылай лартнă.

Кăçал колхоз 12 гектар кантăр акать.

* * *

ЧĂВАШ АССР-ĕнчи МАШИНА-ТРАКТОР СТАНЦИСЕМ ĔÇЛЕНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

Майăн 20-мĕшĕ тĕлне (процентпа)

МТС-сем	Çуллалăкри плана тултарнă	Çуртри акнă	Çĕртме тунă
Сурмайдан	28,4	99,4	45,7
Кувакино	25,6	133,0	31,4
Пăрачкав	24,6	143,2	22,0
Сĕнтĕрвăрри	23,3	85,0	6,8
Чкаловски	22,8	78,9	13,3
Çĕмĕрле	22,3	83,2	3,9
Улатăр	22,2	76,3	6,8
Шупашкар	22,1	73,0	1,1
Октябрьски	22,0	71,4	3,3
Йĕпреç	21,8	115,2	26,1
Шăмăршă	21,8	93,2	13,6
Первомайски	20,8	88,7	30,2
Комсомольски	20,6	95,8	10,7
Сиява	20,4	52,8	15,2
Куславкка	20,0	81,3	1,7
Етĕрне	19,5	63,7	1,3
Муркаш	19,3	102,1	6,6
Çĕрпÿ	19,2	67,0	1,3
Тăвай	19,2	65,0	1,8
Хĕрлĕ Чутай	19,0	58,1	1,1
Красноармейски	18,4	71,6	13,2
Елчĕк	18,0	79,7	6,6
Элĕк	17,9	67,0	—
Канаш	17,7	73,4	0,7
Вăрмар	17,6	79,4	—
Ишлей	17,5	86,6	1,4
Сĕнтĕр	17,5	81,7	8,7
Калинино	16,6	74,8	1,5
Советски	15,9	67,0	7,8
Шăхасан	15,5	80,9	3,1
Вăрнар	14,2	88,9	6,0
Чурачăк	13,8	83,2	9,5

Механизаторсен социализмлă ăмăртăвĕнче малта пыракансем

Чăваш АССР Ялхуçалăх министерстви пĕлтернĕ тăрăх, сурхи уй-хир ĕçĕсенче майăн 20-мĕшĕ тĕлне çак механизаторсем уйрăмах лайăх тĕслĕх кăтартнă:

Сĕнтĕрвăрри МТС-ĕ тăрăх

Черняев юлташ ертсе пыракан трактор бригади кашни 15 лаша вăйлĕ тракторпа 104 гектар сухаланă чухлĕ ĕç тунă. Çак бригадăри **Винторов** тракторист «ДТ-54» тракторпа 305 гектар, **Сучинский** тракторист 329 гектар сухаланă чухлĕ ĕç тунă.

Илларионов юлташ ертсе пыракан трактор бригади кашни 15 лаша вăйлĕ тракторпа 115 гектар сухаланă чухлĕ ĕç тунă. Бригадăри **Иванов** тракторист «ДТ-54» тракторпа 392 гектар сухаланă чухлĕ ĕç тунă.

Вăрнар МТС-ĕ тăрăх

Тойдеряков юлташ ертсе пыракан трактор бригади кашни 15 лаша вăйлĕ тракторпа 112 гектар сухаланă чухлĕ ĕç тунă.

Софронов юлташ ертсе пыракан трактор бригади кашни 15 лаша вăйлĕ тракторпа 108 гектар сухаланă чухлĕ ĕç тунă.

Çав бригадăсенчи **Григорьев, Ильдуганов** трактористсем 300 гектар, **Макаров, Павлов** трактористсем 264 гектар сухаланă чухлĕ ĕç тунă.

Куславкка МТС-ĕ тăрăх

Семахин юлташ ертсе пыракан трактор бригади кашни 15 лаша вăйлĕ тракторпа 122 гектар сухаланă чухлĕ ĕç тунă. Бригадăри **Анисимов, Семахин** трактористсем «ДТ-54» тракторпа 400 гектар сухаланă чухлĕ ĕç тунă.

Васильев юлташ ертсе пыракан трактор бригади кашни 15 лаша вăйлĕ тракторпа 121 гектар сухаланă чухлĕ ĕç тунă. Бригадăри **Архипов, Ларионов** трактористсем СТЗ-НАТИ тракторпа 278 гектар, **Павлов, Орлов** трактористсем СТЗ тракторпа 159 гектар сухаланă чухлĕ ĕç тунă.

Шупашкар МТС-ĕ тăрăх

Чунаев юлташ ертсе пыракан трактор бригади кашни 15 лаша вăйлĕ тракторпа 134 гектар сухаланă чухлĕ ĕç тунă.

Сергеев юлташ ертсе пыракан трактор бригади кашни 15 лаша вăйлĕ тракторпа 132 гектар сухаланă чухлĕ ĕç тунă.

Çав бригадăсенчи **Алексеев** тракторист СХТЗ тракторпа 166 гектар, **Евгеньев** тракторист 157 гектар, **Исаков** тракторист 156 гектар, **Сергеев** тракторист 143 гектар, **Иванов** тракторист 141 гектар, **Семилетов** тракторист 140 гектар сухаланă чухлĕ ĕç тунă.

Чăвашоблпрофсоветăн черетлĕ пленумĕ

Çак кунсенче Чăвашоблпрофсоветăн черетлĕ пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум республикăри профсоюз организацийĕсемĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйтăва—ачасене воспитани парас ĕçре рабочисене тата служащисене пулăшасси çинчен сӳтсе явнă.

Çак питĕ кирлĕ задачăна ăнăçлă пурнăçлама профсоюз организацийĕсен пысăк майсем пур. Сăмахран, кăçал кăна, çуллахи вăхăтра, вĕсем пионерсен лагерĕсенче шкулта вĕренекен çичĕ пине яхăн ачасен канăвне организацилеççĕ. Профсоюзсен клубĕсемпе культура çуртĕсем те ачасен çуллахи канăвне йĕркелес тĕлĕшпе нумай ĕçлемелле пулать.

Кашни профсоюз организацийĕ хуласемпе рабочисен поселокĕсенчи садсемпе парксенче ачасем валли площадкăсем тума, клубсенче утренниксемпе кинофестивальсем, вулавансен конференцийĕсем, наукăпа техника çинчен калаçусем ирттерме пултараççĕ. Заводсемпе фабрикăсенчи профсоюз комитечĕсем производство новаторĕсемпе ачасен тĕлпулăвĕсене, тĕрлĕ экскурсисем ирттерме, çамрăк техниксен тĕрлĕ кружокĕсене йĕркелеме тивĕç. Кунпа пĕрлех ачасене художествăллă пултарулăх кружокĕсене тата физкультурăпа спорт ĕçне ытларах хутшăнтарни кирлĕ. Стадионсемпе спорт площадкисем, шыв спорчĕн станцийĕсем ачасене кĕтсе илме кирек хăçан та хатĕр пулмалла.

Анчах республикăри чылай профсоюз организацийĕсем ачасене воспитани парас ĕçре рабочисене тата служащисене тăтăшах пулăшма кирли çинчен ВЦСПС кăтартса панисене çителĕксĕр пурнăçласа пыраççĕ. Хăшпĕр заводсемпе фабрикăсенчи тата профсоюзсен вырăнти комитечĕсем шкулсемпе тачă çыхăну тытмаççĕ, рабочисемпе служащисен ачисен вĕренĕвĕпе куллен интересленмеççĕ, ачасен ашшĕ-амăшĕсен комитечĕсене сахал пулăшаççĕ, педагогика наукине пропагандăлас ĕçе кирлĕ пек туса пымаççĕ.

Профсоюзсен культура учрежденийĕсем—клубсем, библиотекăсем, хĕрлĕ кĕтессем, киноустановкăсем тата ыттисем те — рабочисемпе служащисен ачисен канăвне организацилес тĕлĕшпе хăйсен пуçарулăхне кирлĕ чухнĕ палăртмаççĕ. Кунпа пĕрлех профсоюз клубĕсен ĕçĕнчи паха опыта сарни кирлĕ.

Чăваш АССР 30 çул тултарнă ятпа тăракан клубра ачасем валли тăтăшах утренниксем ирттереççĕ, рабочисемпе служащисен ачисем хамăр çĕршыври паллă çынсемпе час-часах тĕл пулаççĕ. Çак клубра ачасем валли тăтăшах киносеансем пулаççĕ, çамрăк спортсменсен—шашистсен, теннисла вылякансен, гимнастикăпа интересленекенсен ăмăртăвĕсене ирттереççĕ. Ачасен драмăпа хор, çамрăк техниксемпе фото ĕçне юратакансен кружокĕсем лайăх ĕçлеççĕ. Куславккари çӳрте тăракан заводри библиотека ачасен литература вечерĕсене ирттерет, куннта ача-пăча кĕнекисен выставкине тунă. Çуллахи вăхăтра ачасем валли кусса çӳрекен библиотекăсем пулаççĕ.

Профсоюзсен культура учрежденийĕсем пурте, хăйсен пуçарулăхне ытларах палăртсан, çуллахи вăхăтра ачасен канăвне лайăхрах йĕркелес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем тума пултараççĕ, тумалла та.

Пленум ача-пăча сачĕсемпе яслисенче, çурчĕсенче пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртрĕ. Вăрманпа çул юхтаракан рабочисен профсоюз обкомĕ ку тĕлĕшпе уйрăмах çителĕксĕр ĕçлет. Çак профсоюзăн вырăнти органĕсем вăрман промышленность предприятийĕсенчи ача-пăча учрежденийĕсен ĕçне тăтăшах тĕрĕслесе тăмаççĕ, вĕсенче çирĕп йĕркелĕх тума сахал пулăшаççĕ. Кирери садра, сăмахран, ачасем валли ятарласа тунă пукансем, сĕтелсем, койкăсем çук.

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ завод, «Текстильстрой», Çĕмĕрлери «Комбайндеталь» заводпа сĕтел-пукан тăвакан комбинат дирекцийĕсем ача-пăча учрежденийĕсем валли çурт-йĕрсем тăвас ĕçе е киввисене юсассине вăраха тăсса параççĕ.

Чăвашоблпрофсоветăн пленумĕ ачасене воспитани парас ĕçре рабочисене тата служащисене пулăшассине вăйлатас тĕлĕшпе ВЦСПС кăтартса панисене пурнăçлама тивĕçлĕ решенисем йышăнчĕ.

Философи вĕренмелли кружокра

Элĕкри И. Я. Яковлев ячĕпе тăракан вăтам шкулти учительсем парти вĕренĕвĕн çĕнĕ çулĕ пуçланнă чухне марксистла философине вĕренме кăмăлларĕç. Учительсен пуçарăвне ВКП(б) райкомĕ пурнăçа кĕртме пулăшрĕ.

Мĕн вĕренӳ çулĕ пуçланнăранпах кружок пĕр тикĕс ĕçлесе пычĕ. Занятисем эрнере пĕрре пулаççĕ. Вĕренӳ программине кружок ăнăçлă пурнăçларĕ.

Кружокра вĕренекенсем программăри темăсене Маркс—Энгельс—Ленин—Сталин произведенийĕсем тăрăх вĕренсе, семинарсенче докладсем тăваççĕ. Вĕсенче пурте активлăн тухса калаçаççĕ. Кружокра вĕренекенсенчен кашниех тĕплĕ конспект çырать. Уйрăмах К. Михайлов, Ф. Кузьмин, Г. Максимов, А. Золотов, М. Сергеева, А. Ивановская, П. Дубиков, М. Красильников юлташсем тĕплĕнрех, тарăнрах вĕренсе пыраççĕ, теориллĕ калаçусенче хăйсем хускатнă ыйтусене хальхи пурнăçри фактсемпе çыхăнтараççĕ.

Кружока çӳрекенсем, марксистла философиллĕ материализмăн хăшпĕр ыйтăвĕсене тарăнрах вĕренес шутпа, уйрăм докладсем, лекцисем итлеççĕ. Сăмахран, В. И. Ленинăн «Материализм тата эмпириокритицизм» кĕнеки çинчен ВКП(б) Чăваш обкомĕн лекторĕ Г. Царев юлташ тунă лекцине итлерĕç. Г. Максимов тата А. Порфирьева учительсем Çĕр мĕнле пулса кайни çинчен тата çĕр çинче пурнăç мĕнле пуçланни çинчен совет наукинчи юлашки вăхăтри паллă теорисемпе паллаштарчĕç. Вĕсем Çĕр мĕнле пулса кайни çинчен О. Ю. Шмидт академикăн çĕнĕ теорийĕ тата Çĕр çинче пурнăç мĕнле пулса кайни çинчен вĕрентекен А. И. Опарин академикăн теорийĕ çинчен докладсем туса пачĕç.

Марксистла философиллĕ материализма кружокра тĕплĕн вĕренсе пыни вăтам шкулта математикăна, физикăна, химине, биологине, историне, тăван чĕлхене, вырăс чĕлхипе литературăна тата ытти предметсене вĕрентекен учительсене питĕ пысăк усă парать. Вĕсем кружокра вĕренсе илнĕ пĕлӳсемпе хăйсен куллехи ĕçĕсенче усă кураççĕ.

— Мана кружокра вĕренни шкулти ачасене биологие вĕрентме пулăшать,— тет А. Порфирьева учительница.

Марксистла диалектикăллă материализма вĕренмелли кружок хăйĕн пĕрремĕш çулхи ĕçне ăнăçлă вĕçлет.

А. ТРОФИМОВ,
кружок руководителĕ.

Шкулсенчи экзаменсем

Çитменлĕхсене халех пĕтермелле

ВĂРМАР. (Телефонпа). Районти нумай шкулсенче экзаменсем йĕркеллĕ пыраççĕ. Кăçалхи экзаменсем учительсен коллективĕсем иртнĕ çулхисенчен лайăхрах ĕçленине, вĕренекенсен пĕлĕвĕ чылай ӳсние кăтартса параççĕ.

Вăрмарти вăтам шкулта вĕренекенсемпе учительсем экзаменсене уйрăмах лайăх хатĕрленнĕ. Экзаменсем пуçланнă кун 10-мĕш классенче вĕренекенсем вырăс чĕлхипе сочиненисем çырчĕç. Вĕсем вырăсла лайăх çырма пултарнине кăтартрĕç. Нумай сочиненисене «5» тата «4» паллăсемпе хакланă. 9-мĕш «А» класра геометрипе экзамен иртрĕ. Кунта вĕренекен 14 ачаран 7 ача «5» тата «4» паллă илнĕ. Экзамен тытайманни пачах та пулман. 8-мĕш класра вĕренекенсем арифметикăпа задачăсене хăвăрт тата тĕрĕс шутлама пултарнине кăтартса пачĕç.

Анаткасри çичĕ çул вĕренмелли шкулта та экзаменсем лайăх иртеççĕ. 4-мĕш класра вĕренекен ачасем пирвайхи кун вырăс чĕлхипе диктант çырчĕç. 16 ачаран 9-шĕ «5» тата «4» паллăсем илчĕç.

Халичченхи юлса пынă Хоруйĕнчи çичĕ çул вĕренмелли шкулта та ачасем экзаменсене ăнăçлă тытаççĕ. Ку шкулта малтанхи кун экзаменсем тытайманни пĕр ача та пулмарĕ.

Пинерти, Тупахри çичĕ çул вĕренмелли шкулсенче, Чулкасри тата Çĕнĕ Кавалти пуçламăш шкулсенче те экзаменсем лайăх пыраççĕ.

Анчах хăшпĕр шкулсем экзаменсене тивĕçлипе хатĕрленеймен курăнчĕ. Урнарти çичĕ çул вĕренмелли шкулта тата Çигмĕшри пуçламăш шкулта ачасене тивĕçлĕн вĕрентеймен. Çак шкулсенче 4-мĕш класра вĕренекенсенчен çуррине яхăн вырăс чĕлхипе диктант начар çырнă. Чылай ачасем нимĕн сăлтавсăрах экзамена пыман.

Малтанхи кун экзамена районĕпе 36 ача пыман. Ку ĕнтĕ ачасене шкула çӳреме кирлĕ пек условисем туса памании, учительсем шкул ачисен ашшĕ-амăшĕсемпе тачă çыхăнса ĕçлеменни çинчен калать. Экзаменсем [illegible] пур шкулсенче те вĕри [illegible] организацилеме май пулнă. Анчах та çак ĕçе пурнăçлама тивĕçлипе тăрăшман. 44 шкултан 13 шкулта кăна вĕри апат хатĕрлеççĕ.

Вăтам шкулсене ытти ялсенчен килекен ачасем валли интернатсем тумалла пулнă, анчах вĕсене туман. Ачасене вырнса тăма пушă классем уйăрса панă та, çавăнпа çырлахнă.

Районти çутĕç пайĕ шкулсенче экзаменсем ирттерес ĕçе кирлĕ пек ертсе пымасть. Вăл хăйĕн представителĕсене шкулсене тухса каяс умĕн тивĕçлипе инструктаж паман, çавăнпа та вĕсем хăйсен ответлăхне туймаççĕ. Пинерти, Анаткасри тата Энтриялĕнчи шкулсенче малтанхи кун районти çутĕç пайĕн представителĕсем пулман та. Хăшпĕр учительсем вĕренекенсемпе консультацисене ячĕшĕн кăна ирттереççĕ.

И. ВОЛКОВ.
(Хамăр корр.).

Паян пурте шкулта

СĔНТĔР, майăн 20-мĕшĕ. (Телефонпа). Район центрĕнчи вăтам шкул паян нихçанхинчен капăр. Вĕренекенсем уяв чухнехи пек тумланса килнĕ. *Шкул ачисем экзамен пама пурте вăхăтра пухăннă. Унта та кунта çакăнса тăракан лозунгсемпе плакатсем вĕсене экзаменсене ăнăçлă тытма ырă сунаççĕ.*

Акă, 4-мĕш «А» класра вырăс чĕлхипе диктант çыраççĕ. 24 ача экзамен тытать. Çыру ĕçĕсене пĕтернĕ хыççăн вĕсенчен вуниккĕшĕ «5», вуниккĕшĕ—«4» паллăсем илни палăрчĕ.

5-мĕш «А» класра вĕренекенсем пурте *экзаменсем тытма тивĕçлĕ пулнă.* Малтанхи кун вĕсем арифметикăпа экзамен тытрĕç—задача шутларĕç. Задача шутлама вĕсене виçĕ сехет вăхăт панă. Флора Петровăна Рита Филиппова ученицăсем çак задачăна пĕр сехет хушшинчех шутласа кăларчĕç.

С. НАЛИМОВ.

Кăвайт умĕнче

(Лагерьти пионерсен вăйă юрри)

Сăвă е юрă пуçлаканĕ
Ĕшне варри уçланкă,
Унта кăвайт чĕртрĕмĕр.
Лагерĕпех пухăнса,
Вăй вылямa килтĕмĕр.

Пĕр ушкăнĕ
Кăвайт çунса пынă май
Вутне хурсах пырăпăр.
Юрлаканĕ юрлăпăр,
Ташлаканĕ ташлăпăр.

Тепĕр ушкăнĕ
Пĕр тăван кунта эпир:
Выля, савăн, шкул ачи.
Кам та пулин пирĕнтен
Юрламасăр юлать-и!

Пурте харăс, алă çупса
— Çук, Çук! пулас çук,
Юрламасăр юлас çук!
Лагерьти вăйăсенче
Пуç усакан пулас çук!
— Çук! Çук! пулас çук.
Ӳрĕк-сӳрĕк пулас çук.
Эпир шкулта чухне те
Кая юлса пырас çук.

Пĕр ушкăнĕ
Хăйăр çинче выляса
Хĕртĕнекен вĕт-шакă
Çутă хĕвел, ăш хĕвел
Çирĕплет, тет, шăмшака.

Тепĕр ушкăнĕ
Улăхĕ те умăнтах,
Вăрманĕ те çывăхрах.
Ушкăн-ушкăн утрăмăр,
Çырла, чечек пухрăмăр.

Пурте харăс, алă çупса
— Шарт! шарт! алă çуп!
Сăвă калать Элеçук.
Ун пек шеп те калакан
Лагерĕпе пĕри çук.
(сăвă калаççĕ).

— Хур! Хур! Кăвайт хур!
Пирĕн ташă ăсти пур.
Пĕрре çеç-и?—Вуннăн та..,
Ташла-ташла курса тăр.
(ташă).

— Хур! Хур! Кăвайт хур!
Пул маттур ас, пионер!
Халĕ лайăх канар та
Хĕлле лайăх вĕренер.

Пурте пĕрле, хастаррăн.
Тавах тăван çĕршывне
Пире ырлăх панăшăн!
Тавах Сталин аттене
Тулăх, савăк пурнăçшăн!

Н. ВАÇАНККА.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн УКАЗĔ

Чăваш АССР-ĕнчи врачсене тата медицинăпа фармацевтика ĕçĕнчи ытти работникĕсене орденсемпе тата медальсемпе наградăласси çинчен

Нумай çул хушши лайăх ĕçленĕшĕн çаксене наградăлас:

ЛЕНИН ОРДЕНĔПЕ

1. Зоя Александровна [illegible] — Сĕнтĕр район больницин шăл врачне.
2. Ефим Макарович Макарова — Сĕнтĕрвăрри район больници врачне.

ĔÇЛĔХ ХĔРЛĔ ЯЛАВ ОРДЕНĔПЕ

1. Людмила Дмитриевна Волкована — Шупашкар больницин медицина сестрине.
2. Эсфирь Моисеевна Лендена — Шупашкарти ӳт-тирпе венерика диспансерĕн врачне.
3. Игнатий Максимович Кузнецова — Чăваш АССР Сывлăх министерствин главнăй хирургне.

«ХИСЕП ПАЛЛИ» ОРДЕНĔПЕ

1. Валентина Алексеевна Ивановăна— Шупашкар больницин лаборанткине.
2. Федосия Ефимовна Потребовăна — Шупашкарти ача çурчĕн медицина сестрине.

«ĔÇРИ ХАСТАРЛĂХШĂН» МЕДАЛЬПЕ

1. Адриан Григорьевич Григорьева — Çĕрпӳ район больницин главнăй врачне.
2. Клара Петровна Григорьевăна — Çĕрпӳ район больницин врачне.
3. Степан Кузьмич Еремкина—фармацевта, Шупашкар хулинчи иккĕмĕш аптека управляющине.
4. Вера Григорьевна Ефимовăна — врача, Чăваш АССР Сывлăх министрне.
5. Татьяна Ивановна Ивановăна—Шупашкар хулинчи сивчир станцийĕн фельдшерне.
6. Зоя Дмитриевна Игнатьевăна—Çĕмĕрле хулинчи поликлиникăн шăл врачне.
7. Текус Кузьминична Кузьминана — Шупашкар хулинчи Чапаевский поселокри больницăн лаборанткине.
8. Мария Леонтьевна Леонтьевăна — Шупашкар хулинчи санитарипе эпидемиологи станцийĕн лаборанткине.
9. Васса Афанасьевна Лукинана — фармацевта, Шупашкар хулинчи виççĕмĕш аптекăн рецептарне.
10. Юлия Степановна Михайловăна — Шупашкар больницин медицина сестрине.
11. Василий Терентьевич Москвова — Шупашкар хулинчи лентăсем тĕртекен фабрика çумĕнчи сывлăх пункчĕн фельдшерне.
12. Елизавета Никифоровна Мюресовăна — Тăвай районĕнчи Тĕмер участок больницин акушеркине.
13. Александр Петрович Невснине — фельдшера, Шупашкар хулинчи санитарипе эпидемиологи станцийĕн санитари врачĕн помощникне.
14. Евдокия Тихоновна Николаевăна— Шупашкар больницин врачне.
15. Прасковья Павловна Николаевăна—Шупашкар больницин врачне.
16. Алексей Михайлович Новикова — фельдшера, Тăвай районĕнчи санитарипе эпидемиологи станцийĕн эпидемиолог помощникне.
17. Анна Алексеевна Охотинăна — Шупашкар больницин врачне.
18. Лидия Павловна Поляковăна — Шупашкар хулинчи ача çуратмалли çуртăн акушеркине.
19. Мария Федоровна Федоровăна — Шупашкар хулинчи Чапаевски поселокри больница акушеркине.
20. Сабир Назыровна Хаировăна — Шупашкар заводĕ çумĕнчи сывлăх пункчĕн врачне.
21. Анна Григорьевна Яковлевăна — Шупашкар хулинчи [illegible] яслин медицина сестрине.

«ĔÇРИ ПАЛĂРНĂШĂН» МЕДАЛЬПЕ

1. Ольга Александровна Александровăна—Çĕрпӳ район больницинчи медицина сестрине.
2. Петр Алексеевич Алексеева—фельдшера, Вăрнар районĕнчи санитарипе эпидемиологи станцийĕн эпидемиолог помощникне.
3. Надежда Андреевна Андреевăна — Вăрмар районĕнчи Кив Вăрмарти трахома пункчĕн медицина сестрине.
4. Римма Андреевна Андреевăна—Вăрнарти ачасен шăмăпа туберкулез санаторийĕн медицина сестрине.
5. Анастасия Константиновна Андроновăна—Хĕрлĕ Чутай район больницин медицина сестрине.
6. Александра Ивановна Белковăна — Сĕнтĕр район больницин акушеркине.
7. Варвара Васильевна Васильевăна—фельдшера, Шупашкар районĕнчи санитарипе эпидемиологи станцийĕн эпидемиолог помощникне.
8. Феона Демьяновна Волковăна — Шупашкар хулинчи Чапаевски поселокри больница врачне.
9. Анна Гавриловна Гавриловăна — Шупашкар больницин медицина сестрине.
10. Варвара Порфирьевна Гавриловăна—Вăрнар районĕнчи Уравăш участокĕнчи больница акушеркине.
11. Мария Евдокимовна Евдокимовăна—фельдшера, Вăрнар районĕнчи Вăрманкасри фельдшер пункчĕн заведующине.
12. Ольга Евдокимовна Евдокимовăна—Вăрнарти ачасен шăмăпа туберкулез санаторийĕн медицина сестрине.
13. Раиса Прокопьевна Егоровăна — врача, Шупашкарти пир-авăр фабрики çумĕнчи сывлăх пункчĕн заведующине.
14. Иустиния Еремеевна Еремеевăна— Шупашкар районĕнчи Кӳкеç больницин фельдшерне.
15. Ольга Ефимовна Захаровăна — Сĕнтĕр районĕнчи Урпаш участокĕнчи акушеркăна.
16. Зинаида Ивановна Ивановăна — Куславкка районĕнчи «Динамо» колхозри ача çуратмалли çуртăн акушеркине.
17. Клавдия Михайловна Ивановăна — Шупашкар хулинчи Чапаевски поселокри больницăн врачне.
18. Прасковья Ивановна Ивановăна— Вăрнар район больницин врачне.
19. Клавдия Ефремовна Исаевăна — Йĕпреç районĕнчи Мерчĕкри сывлăх пункчĕн медицина сестрине.
20. Анна Ермолаевна Кондратьевăна— Улатăр районĕнчи Кире участок больницин медицина сестрине.
21. Анастасия Константиновна Константиновăна — Шупашкар хулинчи Чапаевски поселокри больницăн медицина сестрине.

(Юлашки пулать).

Пуçламăш парторганизацисен ĕç опытĕнчен

Агитколлектив ĕçне организацилесе ертсе пырасси

Массăллă-политикăллă ĕç совет çыннисен социализмлă ăнланулăхне, патриотизмне, нациллĕ мăнкăмăллăхне ӳстерме, ĕççыннисене Тăван çĕршывшăн çĕнĕрен те çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантарать. «Социализмлă ăнланулăх совет обществин малалла каяссине хăвăртлатать, унăн вăйĕпе хăвачĕн çăлкуçĕсене ӳстерет,—тенĕ А. Жданов.—Çавăнпа та халăхсен политикăллă тата культурăллă шайне ӳстересси совет строяйĕн пурнăçĕшĕн питĕ кирлĕ ĕç пулса тăрать».

Канаш районĕнчи Маленков ячĕпе тăракан колхозри парторганизаци çумĕнчи агитколлектив хăйĕн пĕтĕм ĕçне массăсен коммунизмлă ăнланулăхне куллен-кун ӳстерес тĕллевпе туса пырать. Уйхир бригадисенче, фермăсенче тата колхоз хуçалăхĕн ытти отраслĕсенче хальхи вăхăтра 43 агитатор ĕçлет. Вĕсенчен коммунистсем 10 çын, комсомолецсем 21 çын, партире тăман актив 12 çын. Агитаторсем пулма кадрсем суйласа илнĕ чухне пуçламăш парторганизаци (секретарĕ С. Сотников юлташ) çакна асра тытать: агитаторсем политикăллă пĕлĕвĕ, çавăн пекех культурăллă тапракурăмĕ пысăк пулмалла, мĕншĕн тесен политикăллă ĕçе сӳтти пуçăмра туса пырасси пĕтĕмпех агитаторсенчен килет. Пуçламăш парторганизаци çирĕплетнĕ агитаторсем хушшинче аслă шкултан вĕренсе тухнисем 13 çын, вăтам шкул пĕтернисем те çавăн чухлех.

Агитколлектив политикăллă-массăллă ĕçре тĕрлĕ майсемпе усă курать: колхозниксем валли тăтăшах лекцисем, докладсем, калаçусем ирттерет, стена хаçачĕ, боевой листоксем, сисĕм-хаçатсем кăларать, массăсен социализмлă ăмăртăвне тата уйрăм колхозникĕсен паха ĕçне анлăн кăтартса парать.

Юлашки çулталăк хушшинче агитколлектив колхозниксем валли 84 лекци, 33 доклад, 120 калаçу ирттернĕ. Лекцисемпе докладсем ирттерес ĕçре уйрăммăнах ялти лекторсен ушкăнĕ паха ĕçсем туса пырать. Ушкăнра 19 çын. Вĕсем пурте вăтам тата аслă шкулсенчен вĕренсе тухнă.

Кашни агитатор хăйĕн участокĕнче тăрăшса ĕçлет, эрнере икĕ хутран кая мар калаçу ирттерет. Агитаторсем бригадăри колхозниксен пухăвĕсене ирттерме хатĕрленес тĕлĕшпе бригадирсене пулăшаççĕ, çав пухусенче тĕрлĕ ыйтусем тăрăх политикăллă докладсем е лекцисем туса параççĕ. Нумай агитаторсем колхозниксем патне киле çӳреççĕ, ун чухне тĕрлĕ ыйтусене ăнлантараççĕ, хаçат çинчи çĕнĕ тата паллăрах хыпарсене вуласа параççĕ.

Парторганизаци агитаторсем ирттерекен докладсен тата калаçусен идейăллă содержанине пуянлатма пулăшать. Хаçат-журналсемпе, агитатор блокночĕпе усă курма вĕрентнипе пĕрлех, агитколлектив кашни агитатора докладсемпе калаçусен планне тума пулăшать, мĕнле литературăпа усă курмаллине кăтартса парать, колхоз умĕнче тăракан конкретлă задачăсемпе паллаштарать, кирлĕ пулсан, колхоз пурнăçĕнчи тĕрлĕ тĕслĕхсемпе фактсене кăтартса парать. Кашни агитаторăн «Агитатор блокночĕ» пур, унсăр пуçне пĕр-ик хаçат çырăнса илет.

Агитколлектив политикăллă-массăллă ĕçе лайăх туса пыма пултаракан кадрсем ӳстерсе çитĕнтерчĕ. В. Баранова юлташ колхоз производствинче алăпах малта пырать, ĕç нормине 120—140 процентран кая тултармасть. Ĕçре хăй паха тĕслĕх кăтартнă пирки унăн сăмахĕсем витĕмлĕ. Вăл çитменлĕхсене хăюллăн критиклет, çав вăхăтрах ĕçе мĕнле тумаллине кăтартса парать, кашни умĕнче тăракан практикăллă ĕçе пĕтĕм колхоз, район, республика тата Тăван çĕршыв умĕнче тăракан задачăсемпе çыхăнтарса ăнлантарать. В. Баранова юлташ ĕçлекен бригада пĕлтĕр кашни гектартан 14 центнер тырă туса илнĕ, кăçал та çак бригада вăйлă тырпул туса илессишĕн тăваттăмĕш бригадăпа ăмăртса ĕçлет.

Пĕрремĕш бригадăри агитатор Русскова юлташ та хăйĕн пултарулăхне аван палăртрĕ. Илемлĕ литературăпа пĕлсе усă курнă пирки вăл ирттерекен калаçусем витĕмлĕ, хумханулă тата питĕ ăнланмаллă пулаççĕ. Вăл яланах колхозниксем хушшинче, вĕсене кирек хăçан та çĕнĕ хыпарсем пĕлтерет, колхозра, районта, республикăра, хамăр çĕршывра тата ытти çĕршывсенче пулса иртекен паллă ĕçсем çинчен каласа парать. Бригадăри колхозниксен пухăвĕсемпе производствăллă канашлăвĕсенче пулса, Русскова юлташ бригадăра социализмлă ăмăрту мĕнле пынине пĕтĕçтерсе, уйрăм колхозниксен çитменлĕхĕсене кăтартса парать.

Агитколлектив стена хаçатне, боевой листоксене, наглядлăй агитацие пысăк вырăна хурать. Çулталăк хушшинче 18 номер стена хаçачĕ, 105 боевой листок кăларнă. Ялхуçалăхĕнчи ответлă ĕçсен тапхăрĕнче—çуракинче, тырпул пухса кĕртнĕ чухне сисĕм-хаçатсем час-часах кăлараççĕ. Боевой листоксем кашни бригадăра тата кашни фермăра тухаççĕ. Вĕсене хĕллехи вăхăтра эрнере пĕрре, çурхи суха-ака вăхăтĕнче, уй-хирти çуллахи ĕçсене тума тытăнсан кун сиктерсе кăлараççĕ. Кашни бригадăрах хаçат витрини пур. Пур çĕрте те: правлени çуртĕнче, клубра, ял Совет канцелярийĕнче, библиотекăра, бригада пӳрчĕсенче, фермăсенче, урамра плакатсемпе лозунгсем çакăнса тăраççĕ. Вĕсем колхозниксене аванрах ĕçлеме, ĕç тухăçлăхне хăпартма чĕнеççĕ. Колхозниксем яланах пулакан урамра пысăк саспаллисемпе çырнă лозунг— «Гектартан 110 пăт тырă туса илессишĕн большевикла кĕрешер!» тесе çырнă лозунг çакăнса тăрать.

Хаçатсем нумай кăларнă пулин те, ку ĕçре пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Стена хаçачĕпе боевой листоксен идейăллă содержанийĕ вăйсăртарах. Вĕсем колхоз пурнăçне тата хуçалăхри çитменлĕхсене тарăннăн уçса параймаççĕ, парторганизацине критикăпа самокритикăна вăйлатма сахал пулăшаççĕ. Пуçламăш парторганизаципе колхоз правленийĕ стена хаçатне çителĕксĕр пулăшаççĕ. Вĕсем хаçатра кăтартса панă çитменлĕхсем çинчен сӳтсе явса, çав çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерме тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ. Унсăр пуçне хитрелĕх енчен те, илемлĕх енчен те хаçатсем çителĕксĕр тухаççĕ.

Колхозри агитаторсен питĕ паха ĕçĕсенчен пĕри вăл—вĕсем колхозниксен пухăвĕсене вăхăтра тата лайăх ирттерессишĕн тăрăшни. Пухусене вăхăтра тата тĕплĕ хатĕрленсе ирттерни колхозниксене воспитани парас ĕçре пысăк вырăн йышăнать. Пĕлтĕр кунта 13 пуху ирттернĕ, вĕсенче, колхоз пурнăçĕн ыйтăвĕсемсĕр пуçне, политикăллă докладсем те туса панă. Бригадăсенче те кашни уйăхра пĕр-ик пуху пулса иртет. Çак пухусенче агитаторсем артель Уставне пурнăçлани çинчен, партипе правительство политики тата решенийĕсем çинчен, тĕнчери лару-тăрупа хамăр çĕршыв пурнăçĕ çинчен, çуллен вăйлă тырпул туса илекен колхозсем çинчен каласа параççĕ. Колхозниксен пухăвĕсем яланах хастарлă тата интереслĕ иртеççĕ, çавăнпа вĕсем колхозниксем пурте пухусене çӳреççĕ. Вăтам шутпа кашни пухура 240—250 çын пулать.

Пĕлтĕр колхоз çĕнĕ клуб туса лартрĕ. Унта 300 çын вырнаçать. Клуба илемлетнĕ. Шалта сакки çителĕклĕ, лайăх сцена пур, чӳречесем çинче чаршавсем çакăнса тăраççĕ. Стенасем çинче—плакатсем, хĕрлĕ хăмач çине çырнă лозунгсем, çулпуçсен портречĕсем. Клубра çутă, ăшă, кăмăллă. Кунта эрнере икĕ хут кино кăтартаççĕ, юлашки [illegible] виçĕ-тăватă уйăх хушшинче 11 спектакль лартса панă. Унсăр пуçне клубра час-часах çамрăксен вечерĕсем пулаççĕ. Киносем, спектакльсем умĕн яланах доклад е лекци ирттереççĕ. Клубра 200 çынран кая пухăнни никçан та пулман.

Анчах клуб ĕçĕнче çитменлĕхсем те нумай-ха. Драма кружокĕсĕр пуçне ытти художествăллă пултарулăх кружокĕсене организацилемен. Наукăпа çутçанталăк, ялхуçалăх пĕлӳлĕхĕсене пропагандăлассине сахал чыслаççĕ.

Ялти библиотека уйрăм пӳртре. Унта 3.000 кĕнеке. Вулакансем 300 çын. Колхозниксем библиотекăра час-часах пулаççĕ: кĕнекесем илеççĕ, çĕнĕ хаçатсем, журналсем вулаççĕ. Ялти библиотекăна колхозниксем патне çывхартас тесе, кусса çӳрекен 4 библиотека тунă. Колхозниксем кĕнекесене интересленсе вулаççĕ, вĕсенчен чылайăшĕ 8—10 кĕнеке илсе вуланă. Иртнĕ хĕлте кунта вулакансен конференцийĕсене 7 хут ирттернĕ.

Çĕнĕ кĕнекесене халăх хушшине сарма ытларах тăрăшсан тата çĕнĕ кĕнекесен витринине тусан, библиотека ĕçĕ тата та ытларах лайăхланĕччĕ, вулакансен йышĕ те ӳсĕччĕ. Колхоз правленийĕпе пуçламăш парторганизаци библиотека валли кĕнекесем ытларах илме çĕнĕ майсем тупма тăрăшмалла. Библиотекăри кĕнекесен хальхи фончĕ колхозниксен ыйтăвне тивĕçтереймест.

Парторганизаци ялти кадрсем валли политшкул, çулпуçсен биографине, парти историне, диалектикăллă тата историллĕ материализма вĕренмелли кружоксем организациленĕ. Вĕсенче 56 çын вĕренет. Кружоксем пурте программăна вĕренсе пĕтернĕ. Унсăр пуçне зоотехникăна вĕренмелли виçĕ çуллăх курс ĕçлет. Ăна райсовет исполкомĕн ялхуçалăх пайĕн зоотехникĕ И. Ермолаев юлташ ертсе пырать. Курсра 14 çын—выльăх-чĕрлĕх пăхакансем вĕренеççĕ. Агротехникăна вĕренмелли виçĕ çуллăх курс та вĕренӳ программине пурнăçласа пырать. Тĕрлĕ кружоксемпе шкулсенче тата курсенче пĕтĕмпе 88 çын, вĕсенчен 43 агитатор вĕренет.

Пуçламăш парторганизаци агитаторсене тĕрĕс ертсе пырать. Эрнере пĕрре агитаторсен семинарĕ пулать. Вĕсенче агитаторсем калаçу ирттермелли темăсене, методикăна вĕренеççĕ, лекцисемпе докладсем итлеççĕ, ĕç планне сӳтсе яваççĕ. Семинарсенче докладсемпе лекцисене колхоз председателĕ А. Мухин, шкул директорĕ В. Чернов, ял Совет председателĕ Ильин, учительсем, парти райкомĕнчен килнĕ юлташсем туса параççĕ.

Агитаторсем массăллă-политикăллă ĕçе куллен туса пынипе колхозниксене производствăра çĕнĕ çитĕнӳсем тума мобилизацилеççĕ. Колхоз хуçалăхлă тата политикăллă пур ĕçсене те вăхăтра туса пырать. Çакă вăл колхозниксен ăнланулăхĕ ӳссе пынинчен килет. Ăна çак тĕслĕх те лайăх çирĕплетсе парать: пĕлтĕр колхозниксем пурте производствăра ĕçленĕ, ĕç кунĕ тумалли минимума тултарман çын пĕрре те çук, кашни ĕçлеме пултаракан колхозник вăтам шутпа 240 ĕç кунĕ тунă.

Колхоз пĕлтĕр кашни гектартан 13-шер центнер ытла тырă туса илнĕ. Колхозниксене кашни ĕç кунĕ пуçне 3,4 килограмм тырă панă. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли виçĕ çуллăх плана, кайăк-кĕшĕксемсĕр пуçне, пур выльăхсем енĕпе те тултарнă.

Кăçал колхоз 48 сысна ами, 1.100 пуç кайăк-кĕшĕк валли витесем тăвать. 270 фестметр йывăç турттарса килнĕ, 30 пин кирпĕч çапса хатĕрлеççĕ. Сталин юлташ патне янă çырура колхозниксем гектартан 110 пăт ыраш, 120 пăт тулă, 900 пăт çĕрулми, 110 пăт кок-сагыз туса илме сăмах пачĕç. Хăйсен сăмахне пурнăçлассишĕн колхозниксем тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем уй-хире минераллă тата вырăнти удобренисемпе нумай çемçетрĕç. Кĕрхи тырă калчисене апат пачĕç, сӳрелерĕç. Колхоз çуракине кĕске срокра тата агротехника тĕлĕшĕнчен лайăх ирттерет.

Пĕтĕм лаптăкран вăйлă тырпул туса илессишĕн бригадăсем пурте ăмăртса ĕçлеççĕ. Фермăсенче ĕçлекенсем çамрăк выльăхсене чипер пăхса ӳстерессишĕн, выльăх-чĕрлĕхрен илекен тупăша нумайлатассишĕн кĕрешеççĕ.

Колхозра социализмлă ăмăрту мĕнле пынине палăртма кăтарту хăми тунă. Ăна кашни 5 кун хушшинче çĕнетсе тăраççĕ. Унсăр пуçне, колхозра куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялав пур, ăна ĕçре мала тухакан бригадăна параççĕ. Ăмăрту итогĕсене парти пухăвĕнче, правлени ларăвĕсенче тата колхозниксен пухăвĕсенче е производствăллă канашлусенче сӳтсе яваççĕ.

Çапла ертсе пырать парторганизаци агитколлективăн куллехи ĕçне.

А. АНТОНОВА.

Асран кайми кинофильм

Чăвашла куçарнă „Чапаев" кинофильма кăтартма пуçларĕç

СĔРПУ. (Хамăр корр.). Кăшаркассинчи «Большевик» колхозра çĕнĕ кинофильма яланах ăшă кăмăлпа кĕтсе илеççĕ. Совет киноискусствин чаплă произведенийĕсем колхозниксен культурăллă шайне ÿстерме пулăшаççĕ. Колхозри пуçламăш парторганизацине комсомол организацийĕ, клубпа вулав çуртĕ колхозниксене кино курма хутшăнтарас енĕпе чылай ĕçленĕ. Клубра çĕнĕ кинофильмсем çинчен тĕрлĕ плакатсем çакăнса тăраççĕ. Кино кăтартасси çинчен колхозри радиоузел урлă пĕлтереççĕ. Яла кино килни çинчен колхозниксем, вĕренекенсем, учительсем пĕр-пĕрне хавассăн каласа параççĕ.

Майăн 20-мĕшĕнче колхоз клубĕнче чăвашла куçарнă «Чапаев» кинофильма кăтартрĕç. Ăна курма сахалтан та 400 çын пухăнчĕ. Совет киноискусствин чаплă произведенине—ĕмĕр асран кайми «Чапаев» кинофильма залра ларакансенчен нумайăшĕ темиçе хут та курнă. Граждан вăрçин чаплă полководецĕ, пирĕн мухтавлă земляк В. Чапаев, дивизи комиссарĕ Д. Фурманов образĕсене чылайăшĕ лайăх астăваççĕ. Çапла пулин те вĕсем чăвашла куçарнă фильма курма уйрăмах хаваслăн пухăнчĕç.

Кино кăтартма пуçличчен Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Кинофикаци управлени начальникĕн заместителĕ Михайлов юлташ халиччен чăвашла куçарнă «Падение Берлина», «Смелые люди», «Кавалер Золотой звезды», «Тарас Шевченко» кинофильмсене куракансем тивĕçлĕ хак пани çинчен каларĕ, «Чапаев» кинофильма курнă хыççăн колхозниксене хăйсен шухăшне каласа пама ыйтрĕ. Б. Евгенев режиссер «Чапаев» кинофильма мĕнле куçарни çинчен каларĕ.

Чаплă кинофильма курма çывăхри ялсенчен те чылай килнĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем, вĕренекенсем, учительсем чăвашла куçарнă çĕнĕ кинофильма пихсанхинчен те интереслĕнсе пăхрĕç, кино пĕтсен хăшпĕр юлташсем хăйсен шухăшкăмăлĕсене каласа пачĕç.

Колхоз председателĕ П. Николаев юлташ каланă сăмахран

Совет киноискусствин пархатарлă произведенийĕсене чăвашла куçарса пыма тытăнни Совет правительствипе большевиксен партийĕ тата аслă çулпуçăмăр Сталин юлташ ĕçхалăхĕн культурине хăпартас тесе тăрăшнине, Тăван çĕршыври халăхсен формипе националлă, содержанийĕпе социализмлă культури аталанса пынине пĕлтерет. Пĕтĕм тĕнчипе палăрса тăракан «Падение Берлина», «Смелые люди», «Кавалер Золотой звезды», «Чапаев» ятлă чаплă кинофильмсене—чăвашла куçарнă фильмсене эпир пурте хаваслансах пăхрăмăр.

«Чапаев» кинофильм та кăмăла кайрĕ, Хамăрăн мухтавлă земляк, граждан вăрçи геройĕсенчен пĕри Василий Иванович Чапаев çинчен эпир нумай илтнĕ. Пирĕн хушăра Д. Фурманов çырнă «Чапаев» кĕнекене вуламаннисем сахал тупăнаççĕ. Ятти колхозниксем, колхозницăсем, ватă стариксемпе çамрăк пионерсем, ялти учительсем нумайăшĕ вырăсла «Чапаев» фильма тăхçанах курнă. Вунсакăр çул каярах кăтартма пуçланă фильм паянхи пекех çĕнĕ.

Темиçе хут курнă пулин те чăвашла куçарнă кинофильма курма халăх нумай пухăнчĕ. Ахаль те ăнланмалла кинофильм, чăвашла куçарсан, татах та лайăхрах ăнланмалла пулса тухнă. Чапаев начдив сăмахĕсене РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ тата Чăваш АССР халăх артисчĕ Алексеев, дивизи комиссарĕн Фурмановăн сăмахĕсене Родионов артист чăвашла лайăх пурне те ăнланмалла каласа параççĕ. Çак фильма куçарса кăларас ĕçе Чăваш государство академи театрĕнчен хутшăннă ытти артистсем те пите усă, пурне те ăнланмалла калаççĕ. Артистсен коллективĕ тата Б. Евгенев режиссер тăрăшса ĕçленĕ, «Чапаев» кинокартинăри сăмахсене И. Тукташ поэт лайăх куçарнă. Эпĕ вĕсене хамăр колхоз членĕсем ячĕпе чаплă ĕçшĕн ырă кăмăлпа тав тăватăп. малашнехи творчествăллă ĕçре чаплă ÿсĕмсем тума ырă сунатăп.



В. И. Чапаев.

Эпир телейлĕ те савăнăçлă пурнăçпа пурăнатпăр. Пирĕн колхозăн пысăк клуб, гидроэлектростанци, радиоузел пур. Колхозниксен килĕсемпе обществăллă суртсенче Ильич лампиcем çунаççĕ. Колхозниксенчен нумайăшĕ хаçат-журнал çырăнса илеççĕ. Ĕçрен пушă вăхăтра клуба, вулав çуртне пухăнса, вĕсем кĕнеке вулаççĕ, шахматла выляççĕ. Клубра час-часах кино пулать. Колхозра чăвашла каласакан фильмсем кăтартни пире уйрăмах савăнтарать.

Телейлĕ те савăнăçлă пурнăç туса панăшăн, халăхсен культурипе искусствине ÿстерме куллен тăрăшнăшăн тăван атте Сталин юлташа тав тăватпăр.

Комсомол организаци секретарĕ П. Андреев юлташ каланă сăмахран

Пирĕн колхоз клубĕнче «Чапаев» кинофильма темиçе хут та кăтартнă. Халĕ тата чăвашла куçарнине кăтартрĕç. Ăна чи малтан пирĕн колхоза килсе кăтартни пире пурне те савăнтарать.

Кинофильмри рольсенчи сăмахсене Алексеев, Родионов, Ананьева тата ытти артистсем усă та ăнланмалла калаççĕ. Вĕсем пурте пĕрле тăрăшса, пĕр-пĕрне лайăх ăнланса ĕçлени кинофильма лайăх куçарма пулăшнă. Артистсемпе писательсене чăвашла кинофильмсем куçарас енĕпе малашне те ăнăçлă ĕçлеме ырă сунатăп.

«Чапаев» кинофильма курма ваттисем те, çамрăксем те, хĕрарăмсем те, арçынсем те чылай пухăнчĕç. Кунта Василий Иванович Чапаевпа пĕр вăхăтра çуралнисем, унтан аслăраххисем те пур. Экран çине пăхса ларса, вĕсем йывăр граждан вăрçи вăхăтне, тăшмана хирĕç алла хĕç-пăшал тытса çапăçнă çулсене аса илеççĕ. Çамрăк совет влаçне хÿтĕлессишĕн пурнăçа шеллемесĕр кĕрешнĕ командирсемпе большевикла комиссарсем тăшмана çĕнтерме хавхалантарса пынă. Кунтах Отечественнăй вăрçăра пулнисем те чылай. Вырăс халăхĕн легендарлă полководецĕсен образĕ вĕсене нимĕç фашисчĕсене хирĕç паттăррăн, «Чапаев» кинофильмри геройсем пек, çапăçма хавхалантарнă. Малти ретсенче шкулсенче вĕренекенсемпе ытти çамрăк колхозниксем лараççĕ. «Чапаев» кинофильм пирĕн çамрăксем юратакан чи лайăх фильмсенчен пĕри шутланать.

«Чапаев» кинофильмри ĕçсем пулса иртнĕренпе чылай вăхăт иртнĕ ĕнтĕ. Çак чаплă произведени пире, çамрăксене, граждан вăрçи çулĕсене, пирĕн аттесемпе пиччĕсем çамрăк совет çĕршывĕшĕн кĕрешнине, пĕртен-пĕр социализм çĕршывне тăшмансенчен хÿтĕлесе хăварнине аса илме пулăшать. Вăхăт нумай иртнĕ пулин те эпир «Чапаев» кинофильмра кăтартса панă вăхăта, Тăван çĕршывăн пуçĕсене хунă геройсене ĕмĕр-ĕмĕр асра тытса пурăнăпăр. Вĕсем пире, совет çамрăкĕсене, ĕçре тата вĕренÿре хавхалантарса пыраççĕ.

Владимир Ильич Ленин: кино—мĕнпур искусствăсенчен чи лайăх, чи массăллă искусство пулса тăрать, тенĕ. Кинофильмсем çамрăксене хăюллă, чăтăмлă, Тăван çĕршыва парăнса ĕçлекен çынсем пулма вĕрентеççĕ. Шкулсенче вĕренекен пионерсемпе çамрăксенчен чылайăшĕ Чапаев пек пулма ăмăтленеççĕ.

«Чапаев» кинофильма чăвашла куçарни çамрăксене воспитани парас ĕçе вăйлатма пулăшать.

П. Яковлев учитель каланă сăмахран

Василий Иванович Чапаев—халăх геройĕ. Хăй дивизийĕнчи командирсемпе тата салтаксемпе, ытти çынсемпе вăл пурне те ăнланмалла чĕлхепе калаçать. Çавă ĕнтĕ кинофильма лайăх ăнланма пулăшать, И. Тукташ чăваш артисчĕсем калани те пурне те ăнланмалла пултăр, вырăсла кинофильмăн пахалăхĕ пĕре те ан вăйсăрлантăр тесе тăрăшнă. РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ тата Чăваш АССР халăх артисчĕ Б. Алексеев Чапаев пекех çăмăл та ăнланмалла, чăн-чăн халăх чĕлхипе калаçать. Кинофильм чăваш халăхне ăнланмалла пултăр тесе, ытти артистсем те тăрăшса ĕçленĕ. Кинофильмри музыка та илемлĕ.

«Чапаев» кинофильма чăвашла ăнăçлă куçарни пирĕн артистсен пултарулăхĕ ÿссе пынине, чăваш халăхĕн искусстви вăйланнине пĕлтерет. Ăна республикăра пур çĕрте те ăшă кăмăлпа кĕтсе илĕç.

Паллăрах ытти кинофильмсене те чăвашла куçарни кирлĕ.

Çĕнĕ çитĕнÿсемшĕн

ЧУРАЧĂК. Шуркасси ял Совечĕ Чуракасси ял Совечĕпе социализмлă ăмăртăва тухса обязательствăсем илчĕ. Хальхи вăхăтра илнĕ обязательствăсене пурнăçласси куншерен лайăхланса пырать. Ял Советне виçĕ колхоз кĕрет. Вĕсем çуракине ăнăçлă ирттереççĕ.

Кăçал ял Совет территорийĕнче строительство ĕçĕсене анлă сарма палăртнă. Колхозсем йывăç чылай кÿрсе килнĕ. Строительство бригадисем ĕçлеççĕ. Саман кирпĕчсем тума станоксем хатĕрленĕ. Çак хĕрÿ ĕçре ял Совет депутачĕсемпе активистсем пуçарулăх ĕçлеççĕ, вĕсем хăйсен хастарлăхĕпе ытти колхозниксене ĕçре çитĕнÿсем тума хавхалантараççĕ.

Нумаях пулмасть Сталин ячĕпе тăракан колхозра 3 çăл юсанă, 2 çăл çĕнĕрен тунă.

Кăçал ялта клуб, виçĕ библиотека уçма палăртнă. Библиотекăсем валли 750 тенкĕлĕх кĕнеке илнĕ, клуб тума йывăç хатĕрленĕ. Паян-ыранах хăма сурма тытăнаççĕ.

Ял Совечĕ 1952 çулхи пĕрремĕш кварталта финанс планне 137 процент тултарчĕ. Государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлесе памалли плана тултарнă.

Шуркасси ял Совечĕ хуçалăхпа культура строительствинче çĕнĕ çитĕнÿсем тăвассишĕн куллен тăрăшса ĕçлет.

Ф. СЕМЕНОВ.

Ăмăрту вăйланса пырать

Чкаловски районĕнчи ял Совечĕсем хушшинче укса-тенкĕ пухас тĕлĕшпе социализмлă ăмăрту куллен вăйланса пырать. Иртнĕ пилĕк кунлăхра самообложени пухмалли иккĕмĕш квартал планне район 85 процент тултарнă. Колхозсен, рабочисемпе служащисен тупăшĕсенчен илекен налог укçине пухасси те ăнăçлă пулса пырать.

Ял Совечĕсем хушшинче пыракан социализмлă ăмăртура Хирти Пикшик, Тутар Тимĕшĕ, Красномайск, Сăкăт тата Кивĕ Ахпÿрт ял Совечĕсем малта пыраççĕ. Хирти Пикшик ял Совечĕ майăн 20-мĕшĕ тĕлне иккĕмĕш кварталта укса-тенкĕ пухмалли плана 76,5 процент тултарса социализмлă ăмăртура малти вырăна тухрĕ. Тутар Тимеш ял Совечĕ плана 72 процента яхăн, Красномайск ял Совечĕ 69,5 процент, Кивĕ Ахпÿрт ял Совечĕ 55,2 процент тултарчĕç.

(Хамăр корр.).

ЯЛХУÇАЛĂХ МАСТЕРĔСЕН КУРСĔСЕНЧЕ

ВĂРМАР. Виçĕ çул вĕренмелли ялхуçалăх мастерĕсен курсĕсем районти пур колхозсенче те ĕçлерĕç. Курсенче агротехникăна тата зоотехникăна вĕренессине организацилеНĕ. Агротехникăна пĕрремĕш çул 125 çын, иккĕмĕш çул 400 çын, зоотехникăна 385 колхозник вĕренчĕç.

Хальхи вăхăтра курсенче пĕлÿ тĕрĕслевĕсем пыраççĕ. «Дружба» колхозра пулса иртнĕ пĕлÿ тĕрĕслевĕ колхозниксем вĕреннĕ программăна лайăх пĕлнине кăтартса пачĕ. Колхоз бригадирĕсем М. Яковлев, А. Леонтьева, аслă конюх В. Тимофеев, кок-сагыз бригадин звеновочĕ Р. Желтухина комсомолка тата ытти чылай юлташсем «5» паллăсем илчĕç.

Пĕлÿ тĕрĕслевĕсем «Большевик», Мичурин ячĕпе тăракан, «Хĕрлĕ Кĕтне», «Хĕрлĕ Мăрат», «Авангард», Сталин ячĕпе, Молотов ячĕпе тăракан колхозсенче те пулса иртрĕç.

Г. ИСАЕВ.

Педагогика институчĕ çĕнĕ вĕренÿ çулĕ умĕн

Партипе правительство тата И. В. Сталин юлташ тăрăшнипе пирĕн аслă çĕршывăмăрта наукăпа культура çултан-çул ÿссе пырать. Тĕслĕхрен, аслă шкулсенче вĕренекенсен шутне илсен, эпир çакна куратпăр: Совет Союзĕнче 1951 çулта 887 аслă шкулта 1.356 пин студент вĕреннĕ. 1950 çулхипе танлаштарсан вăл 108 пин студент хутшăннине кăтартать.

1952 çулта аслă шкулта вĕренекенсен шучĕ тата нумай ÿснĕ. Социализмлă çĕршывăн хуçалăхĕпе культури пысăк утăмсемпе малалла аталанса пынă вăхăтра, паллах ĕнтĕ, пире тĕрлĕ отраслĕсенче ĕçлеме пултаракан, нумай вĕреннĕ çынсем—специалистсем кирлĕ пулаççĕ.

Шкулсенче ачасене вĕрентме учительсем вĕрентсе хатĕрлесси çитех те пысăк ĕç пулса тăрать. Пирĕн вăтам шкулсен хисепĕ çултан-çул ÿссе пырать. Унпа пĕрлех 5—10-мĕш классенче вĕренекенсен шучĕ те çултан-çул нумай ÿсет. Çавăнпа та пирĕн çичĕ çул вĕренмелли шкулсемпе вăтам шкулсенче ĕçлеме учительсем нумай кирлĕ пулаççĕ. Хальхи вăхăтра шкулсенче физикăпа математика вĕрентекен учительсем çитмеççĕ. Шкулсем валли учительсем хатĕрлес ĕçре Шупашкарти педагогика институчĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Кунтан вĕренсе тухакансем ытти республикăсенчи шкулсенче те нумай ĕçлеççĕ. Чăвашсен государство педагогика институчĕ хăйĕн тăватă факультетĕнче 9 специальность енĕпе учительсем вĕрентсе хатĕрлет: истори отделенийĕ—историпе вĕрентекен; чăваш отделенийĕ—чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен; физикăпа математика факультечĕ—физикăпа математика предмечĕсемпе вĕрентекен; естествознани факультечĕ—химипе биологие вĕрентекен учительсене хатĕрлет. Вырăс чĕлхипе литературине вĕрентекен учительсене хатĕрлекен уйрăм пур. Ют чĕлхесен факультетĕнче—акăлчан тата нимĕç чĕлхисене вĕрентме пултаракан учительсене хатĕрлеççĕ.

Хальхи вăхăтра пирĕн институтра 1.200 ытла студент вĕренет. Студентсене марксизм-ленинизм теорине тата хăйсен специальносĕпе тĕрлĕ наукăсене тĕплĕн вĕренме çителĕклĕ условисем туса панă. Икĕ çуртра 14 тĕрлĕ кабинет, пысăк библиотека пур. Библиотекăра студентсем харпăр хăй тĕллĕн вĕренме, хăйсен пĕлĕвĕсене ÿстерме кирлĕ кĕнекесене илме пултараççĕ.

Чи лайăх вĕренекен, обществăлла ĕçе активлă хутшăнакан студентсем Сталин ячĕпе тăракан стипенди илсе тăраççĕ. Кунсăр пуçне тата чăваш педагогĕ И. Я. Яковлев ячĕпе тăракан тата Комсомол XV çул тултарнă ятпа паракан стипендисене илекенсем пур.

Институтра студентсен наукăпа тĕпчев ĕçне туса пыракан общество пур. Ку общество 600 студента пĕрлештерсе тăрать. Унта 16 кружок ĕçлет. Студентсен обществи вĕсене наукăпа тĕпчев ĕçне хутшăнтарма, çак ĕçе хăнăхма пулăшать. Общество тĕрлĕрен конференцисем ирттерет, бюллетеньсем, журналсем кăларать. Наукăпа тĕпчев ĕçне туса пыракан общество студентсен пĕлĕвне тарăнлатма пулăшать.

Студентсем хăйсен канÿ вăхăтне савăнăçлă та культурăллă ирттереççĕ. Институтра хор, драма тата ташă кружокĕсем ĕçлеççĕ, кашни шăматкун кино пулать. Кунсăр пуçне студентсем час-часах вечерсемпе концертсенче пулаççĕ.

Институтри вĕренÿпе канÿ условийĕсем малашне тата та лайăхрах пулаççĕ. Партипе правительство тăрăшнипе кăçал педагогика институчĕ валли çĕнĕ те пысăк, илемлĕ çурт тума тытăнаççĕ. Ку çуртра 1.600 студент вĕренме пултарать. Унăн пысăкăшне çакăнтан та курма пулать: вăл Шупашкарти мĕнпур çуртсенчен чи пысăкки пулать, унта 450 çын тăнăçмалăх зал тата ытти пÿлĕмсем нумай пулаççĕ. Кăçалхи çул çак çуртра тума 1,5 миллион тенкĕ укçа уйăрса панă. Çакă вăл пирĕн партипе правительство аслă шкулсене аталантарса пыма тимлĕ тăрăшни çинчен каласа парать.

Чăваш педагогика институчĕ 22 çул ĕçлет. Çак вăхăтра вăл 3.800 учитель вĕрентсе кăларнă. Институтран вĕренсе тухнă çынсем нумайăшĕ шкул директорĕсем, вĕренÿ пайĕн заведующийĕсем пулса, çавăн пекех наукăпа тĕпчев енĕпе ĕçлеççĕ. Вĕсенчен хăшпĕрисем халĕ институтра студентсене вĕрентеççĕ (М. Я. Сироткин, М. Т. Григорьев, Д. Д. Шуверов тата ытти те).

1952—53-мĕш вĕренÿ çулĕнче институтăн пĕрремĕш курсра вĕренме 400 çын илмелле. Вăтам шкул директорĕсемпе учительсем кăçал 10-мĕш класран вĕренсе тухакан ачасене хăйсен малашнехи вĕренĕвĕ çинчен, мĕнле специальность суйласа илмелли çинчен тĕплĕн ăнлантарса памалла, вĕренекенсене çак ĕçре тивĕçлĕ пулăшу памалла. Пирĕн çĕршывра кирек кам валли те хăйне килĕшекен специальноçа вĕренме тивĕçлĕ условисем туса панă. Инженер, агроном, врач—пурте кирлĕ пирĕн çĕршывра. Анчах çав специалистсене хатĕрлеме чи малтан учитель кирлĕ. Учитель специальносĕ—пархатарлă, чыслă специальность. Çавăнпа та партипе правительство учительсен пурнăçпа ĕçлĕ условийĕсене лайăхлатассишĕн яланах хытă тăрăшнă, тăрăшаççĕ те. Ун çинчен учительсен ĕç укçипе пенсине ÿстерни те, учительсене нумай çул хушши тÿрĕ кăмăллă тата лайăх ĕçленĕшĕн орденсемпе медальсем памалла туни те пите лайăх каласа парать. Владимир Ильич Ленинпа Иосиф Виссарионович Сталин халăх учительне яланах пысăк вырăна хунă, учительсем коммунизм обществи тăвас ĕçре паллă вырăн йышăнса тăнине кăтартса панă.

Кăçал пирĕн республикăри вăтам шкулсенчен 2.500 ытла çамрăк вĕренсе тухать. Вĕсенчен чылайăшĕ педагогика институтĕнчен вĕренсе учитель пулма кăмăл тăвĕç. Шупашкарти педагогика институчĕн коллективĕ кăçал вăтам шкулсенчен вĕренсе тухакан çамрăксене хăй патне вĕренме килме чĕнет. Халĕ институт коллективĕ çĕнĕ вĕренÿ çулне тимлĕн хатĕрленет. Çĕнĕ вĕренÿ çулĕнче лайăх, ăнăçлă вĕренме мĕн кирлине пĕтĕмпех тума тăрăшатпăр.

Н. ЕВЛАМПЬЕВ,
Чăвашсен государство педагогика институчĕн директорĕ.

САВĂНĂÇ

ОЧЕРК

Çуллахи хĕвеллĕ кун.

Кăнтăр енчен вĕрекен тÿлек çил ешĕл йывăç тăррисене лăпкăн ачашлать. Садра колхозницăсем юрла-юрла хăмла çырли пухаççĕ.

— Татах пухатпăр-и?—ыйтрĕ вĕсенчен пĕри Иван Гордеевичран.

— Пухасса пухăпăр-ха, анчах ыранах сутса пĕтерĕç-ши кунта ăна. Тепĕр куна юлсан, ан пăсăлтăр вăл,—Иван Гордеевич тăхтаса тăчĕ.

— Чимĕр-ха, паян ситĕ...

Çак сăмах синех сада сарă сÿслĕ пĕр çивĕч ача вĕстерсе çитрĕ.

— Иван пичче!—терĕ вăл васкаса.—Ыран Шупашкара автомашинăпа çырла сутма каяççĕ. Ытларах пухма каларĕç правленире.

Колхозницăсем каллех тÿлек çилпе хумханса ларакан хăмла çырли йывăççисем хушшине кĕрсе кайрĕç. Шултра çырласене вĕсем хăвăрт пухаççĕ, витре хысçăн витре тултарса пушатаççĕ.

— Çырла кăна мар-ха, пахчаран та сутма тытăнăпăр,—савăнса калаçать Иван Гордеевич. Вăл сăйне ... тураттисем çинчи шултра та хĕрлĕ йăрăмлă улмасем çине кăмăллăн пăхса илет.

Садпа пахча бригадирĕ Иван Гордеев çак пархатарлă ĕçе вăрçăчченех тусапынă. Аван сад ÿстернĕ вĕсем. Ешĕл те илемлĕ сад çинчен вăрçă хирĕçне те манман вăл. Киле таврăнсан вара, тепĕр куннех, костыль çине таянса, сада çитсе курнă. Анчах ÿкĕнмелле пулнă: хăшпĕр йывăççем хăрнă, хăй калашле, теприсем «шурă шупăр тăхăннă».

Çак кунтан Иван Гордеевича сада юсас шухăш канăç паман. Çавна правленире ĕçлекенсем те сиснĕ.

— Тĕм пекехчĕ,—тенĕ вĕсем.—Халех сада ярăттăмăр сире. Анчах костыль вĕсçĕн мĕнле çÿрĕр. Хăвăра йывăр.

— Эсир ун çинчен мар-ха, сад çинчен ытларах шухăшлăр. Манăн ура—вăл пĕр сынăн, суранĕ иртнĕ унăн, тÿрленет те ĕнтĕ вăл. Сад вара—колхозăн, халăхăн.

Колхоз правленийĕ унăн шухăшĕпе килĕшнĕ. Иван Гордеевич каллех садпа пахча бригадирĕ пулса тăнă. Вара вăл, ним тума тытăничченех, бригада йĕркеленĕ. Колхоз правленийĕпе килĕшсе, вăрçăччен хăйпе пĕрле ĕçленĕ колхозницăсене суйласа илнĕ.

Хĕрÿллĕ суркунне çитнĕ. Сăртсем юртан тасалнă, Иван Гордеевич бригадăна сада ертсе тухнă. Çак кун унăн пурнăç çĕнĕрен пуçланнăн туйăннă.

— Хăвăрах куратăр, умра пысăк та кăткăс ĕçсем,—тенĕ вăл бригада членĕсене.—Çĕнĕрен сад лартса тунинчен те ытларах ĕçлеме тивет. Анчах ÿсĕм тени пихçан та ахаль килмест, ăна йывăрлăхсене çĕнтерсе тумалла. Çавăн пек ÿсĕм кăна çирĕп пулать. Çавăн вара тăвапăрах, тата мĕнлерех пулĕ! Каларĕ, тейĕр акă.

Бригадир сада юсамалли ĕçсене палăртма тытăннă.

— Халĕ пирĕн кашни йывăçа мĕнле сиплештермеллине пĕлес пулать,—тенĕ Иван Гордеевич. Вăл пĕр йывăç патĕнчен тепĕр йывăç патне пынă.—Ку, акă, хăвăртрах самайланма пултарать. Хăрăк турачĕсене кăна татса пăрахмалла. Чĕррисем вара аван ÿсĕççĕ.

Бригадир тата тепĕр йывăç патне пынă.

— Ку вара хăрса ларас патнех çитнĕ.—Вăл чĕркуçленсе ларнă. Йывăç тымарĕсем çинчи тăпрана чавса уснă.—Пăхăр, пăхăр! Çиелти тымарĕсем чĕп-чĕрех хăйĕн. Анчах сыпнинчен айлан хăрнă. Кăна хунав ÿстерсе, кăчăкă лартса чĕртес пулать. Унсăрăн пурпĕрех майлă çимĕç йывăççи пулас çук.

Темиçе кун вĕсем çавăн пек тĕпченĕ, нумай ĕçсем тума палăртнă.

— Пултарăпăр-и эпир, пăшăрханмалла пулмĕ-и сире, Иван Гордеевич?—тенĕ ун чухне хăшĕсем.

— Пултаратпăр!—тенĕ бригадир шанчăклăн.—Ун пирки калаçса сăвар пылакне те сая ан ярăр. Пултарма хамăрăн опыт тата Мичурин вĕрентĕвĕ пур пирĕн,—хавхалантарнă вăл бригада членĕсене.

Сăмах майĕн каласан, аслă ученăй вĕрентĕвне Иван Гордеевич фронтра та аса илнĕ. Госпитальте И. В. Мичурин кĕнекисене тупса вуланă, киле таврăнă чухне вĕсене салтак кутамкине чиксе килнĕ.

Иван Гордеевич бригада членĕсене кашнинех мĕн тумаллине кăтартса панă. Колхозницăсем шуçăм кайăкĕсемпе пĕрле тăрса мĕн тĕттĕмччене садра ĕçленĕ. Нумай йывăççене ÿсекен тунă, хăрнисем вырăнне çĕнĕрен лартса чĕртнĕ. Йывăççем тавра кăпкалатнă, тислĕк, торф тата ытти удобренисем те нумай хунă. Шăварнă тислĕк шĕвекĕпе апат панă. Садра кашни сулах çавăн пек хĕрÿллĕ ĕçленĕ.

* * *

Икĕ çырма хушшинчи тăмлă сăртсемпе лапамсенче малтан курăк та ÿсмен. Халĕ çакăнта илемлĕ сад ешĕрет.

...Вăл çапла пулнă. Пĕррехинче колхозниксем артель валли укса-тенкĕ ытларах тăвасси çинчен калаçнă.

— Тырă сутас пулать, урăх пирĕн мĕнрен укса тăвас,—тенĕ хăшпĕрисем.

Вăл уйчен те çавăн пек пулнă, колхоз яланах тырă сутса укса тунă.

— Аста пырса ан тĕкĕн, уншăн тырă сутмалла. Укса тумалли урăх майсем пымалла мар-и пирĕн? Ял-илĕмĕпе садпа пахчаран самай тупăш илеççĕ, пули-пулми çĕрех тырă тăкаккамассĕ. Пирĕн те сад тăвас мар-и? Халех мар пулсан та, пурăна-киле тупăш паракан пулĕ,—сÿтсе явнă колхозниксем.

Колхозниксем халиччен ахаль выртнă ял çывăхĕнчи çырма тайлăмĕнче сад тума килĕшнĕ. Сад тума тăрăшса, вĕсем нумай вăй хунă. Пĕрисем сухаланă, вĕресене тăпра кăпкалатнă, удобренисем кăларнă. Теприсем пулас сад тавра карта тытнă, çимĕç йывăççисем лартнă. Садра малтан колхозниксем хăпса ĕçленĕ.

Колхозниксем тăрăшни ахаль пулман, вĕсем вăйлă сад ÿстернĕ.

...Пĕррехинче Иван Гордеевичпа чие йывăççисемпе витĕннĕ сăрта тухса лартăмăр. Кунтан садăн пĕтĕм илемĕ курăнать. Лутакарах чие йывăççисен патмар турачĕсем синче хĕрлĕ-кĕрен çырласем шерепен-шерепен усăнса аннă.

— Эпир Мичурин сорчĕсене ытларах лартма тăрăшрăмăр. Ун пеккисем халĕ улма йывăççисем кăна çирĕм сорт ытла пирĕн. Ку ретре, акă, «Славянка», леш — «Пепин-шафранный». Ку тата «Вельфлер-китайка».

Пирĕн умри лапамра, ярăмăн-ярăмăн, тĕксĕм-симĕс çулçăпа витĕннĕ делянка сарăлса выртать.

— Хура хурлăхан делянки вăл,—тет Иван Гордеевич.—Эпир ăна «Неаполитанская» тата «Лия плодородная» текен сортсене ретĕн-ретĕн ылмаштарса лартрăмăр. Икĕ тĕрлĕ сорта çавăн пек ылмаштарса лартни хурлăхана чечекре чухне лайăх шăрkalanma, вара унăн тухăçлăхне ÿстерме май парать. Кашни сорт хурлăханăн хăйне май ăйли пур тата. Хура хурлăхан лапамра, курлĕ вырăна юратать.

Хура хурлăханпа юнашар тайлăмра—хăмла çырли делянки. Унтан леререх симĕс хурлăхан ешĕрет.

Чие йывăççисен тепĕр сĕрти делянки. Вырăнти сортсен хунавĕсем çине Мичуринăн «Краса севера» тата «Юбилейная Мичурина» текен сортсене кăчăкăпа сыпса чĕртнĕ. Питĕ лайăх ÿсеççĕ вĕсем.

— Кун пек опыта эпир чие йывăççисен вырăнти сорчĕсене аваллатас шутпа турăмăр. Ăнăçлă пулчĕ,—каласа парать Иван Гордеевич.

* * *

Иван Гордеевич тÿлек те йăваш кăмăллă çын. Шухăшĕсем вара çав тери хăюллă унăн. Пĕр-пĕр çĕнĕ шухăш çуралсан тусан, ăна пурнăçламасăр, вăçне çитермесĕр пихçан та лăпланмасть. Колхоз правленийĕпе парторганизаци те унăн шухăшĕсене кăмăлласа йышăнаççĕ.

— Халĕ пирĕн кашни колхозăн çырласимĕç савĕ пулмалла,—тет Иван Гордеевич.

Çак шухăш ăна яланах канăç паман. Вăл колхозсем валли лартмалли симĕç йывăççисем хатĕрлеме тытăннă. Çак ĕç ăнăçлă пулнă. Пĕр суркунне кăна колхозсемпе шкулсене унтă пин тĕп хăмла çырли, пиншер тĕп хурлăханпа чие йывăççисем лартма кăларса панă.

Ăна вĕсем çапла тăваççĕ. Суркунне симĕс хурлăханăн аялти турачĕсене авса хураççĕ, çине тăпра витеççĕ, шăвараççĕ. Çу каçипе туратсем тымар ярса аталанаççĕ, ÿсеççĕ. Тепĕр суркунне ăна касса илсе лартма пулать. Хура хурлăхан турачĕсене пата йăран çине лартса тымарлантараççĕ, вара каллех лартма хурлăхан тĕпĕ пулать. Ăнăçлă ĕç хăюллă шухăшсем суратнă. Вĕсем пысăк питомник тунă. Унта халĕ çитмĕл пин тĕп ытла улмусси ÿсет. Кăçалтан вĕсене колхозсене кăларса пама тытăнчĕç ĕнтĕ.

Бригадир сад ĕçĕпех лăпланман. «Пахча çимĕçĕсем лартмалла, вĕсене ĕçкунĕсем çине валеçмелле, сутса тупăш илмелле»,—шухăшланă вăл.

Каланă, тунă. Таврара сук пахча ÿстернĕ вĕсем. Суханĕ, хăшманĕ, кишĕрĕ, хăярĕ, ир пулакан купăсти,—пурте пур кунта. Хăвăрт пулакан помидор ÿстерме те вĕреннĕ. Çак çимĕçсене никамран малтан пасарсене илсе тухаççĕ вĕсем. Теприсем лартнă вăхăтра, вĕсен помидор писсе çитет.

Тата çавăн пек пулнă. Иван Гордеевич Етĕрне пасарĕнче чышкă чăмăрĕ пысăкĕш арбузсем сутнине курнă. Вăл арбуз лартса тума тытăннă.

— Ку ĕç малтанхи çул кирлĕ пек ăнăçлах пулаймарĕ, леш хам курнă чышкă чăмăрĕ пек арбузсем кăна пулчĕç. Арбуз ачаш çимĕç, вăл чăрмавлăскер тата, çивне юратмасть. Ир лартсан, сивĕпе пăсăлать, тăхтарах тăрсан, пулса çитеймест. Тымарĕсем аталаничченех те вăхăт нумай иртет. Вара акă мĕн турăмăр. Тислĕк сĕрĕкĕпе торфа çĕрĕн сиелти сийĕнчен илнĕ тăпрапа хутшăнтарса, арбуз калчисене парникре çитĕнтерме кĕрупнех кубиксем туса хатĕрлерĕмĕр. Шăтнă вăрăсене суркунне парнике хурса тухнă кубиксем çине лартрăмăр. Калчасем парка ÿсрĕç. Çуркуннехи сивĕсем иртсен, арбуз калчисене кубиксемпе пĕрле усă çĕре куçарса лартрăмăр,—каласа парать бригадир.

Пĕлтĕр Шупашкар пасарĕнче панулми пек чипер те çаврака питлĕ хĕрачасем шултра помидорсем, пысăк арбузсем, ытти çимĕçсем кĕркуннеччченех сутрĕç. Эсĕ те ун чухне, вулакан, тăхăр килограмм таякан арбуз илтĕн вăл хĕрсенчен.

— Аçтисем, анатри Атăл тăрăхĕнчи чăвашсем ÿстернĕ-и кун пек арбузсене?

— Çук-çке, тури чăвашсем, Тăхăр ял Хучашсем тесçĕ пирĕн тăрăхрисене, Жданов ячĕпе тăракан колхозран эпир.

* * *

Ешĕл йывăçсем хушшинче тирпейлĕ çурт ларать. Ку вăл бригадирăн кабинечĕ. Шуратса тирпейленĕ çуртра йăлтах йĕркеллĕ, пурте хăй вырăнĕнче. Сĕтел çинче радиоприемник. Унта садпа пахча ĕçĕсем синчен çырнă кĕнекесем, хаçат-журналсем, И. В. Мичурин кĕнекисем, бригадир табелĕсем. Çакăнта бригада членĕсем пушă вăхăтра пухăна-пухăна вĕренеççĕ.

Сад çитĕннĕ. Унпа пĕрле çынисем те вĕренсе ÿснĕ. Унта 6—7-шер çул ĕçлекен Евгения Афанасьева, Клавдия Сергеева, Нина Тихонова тата ыттисем те ĕçлеççĕ.

Пĕлтĕр колхоз садпа пахчаран пысăк тупăш илнĕ. Чĕрĕк гектар çинчи арбуз кăна çитмĕл пин тенкĕ таран тупăш панă.

Хучашсем укса-тенкĕ тума тек тырă сутмаççĕ. Тырри ĕçкунĕсем çине ытларах валеçеççĕ, выльăхсем валли нумай уйăраççĕ. Савăнаççĕ уншăн халĕ вĕсем.

Бригадăн ĕмĕчĕсем кăçал тата анлă те хăюллă. Вунуллă гектар çинче сад лартаççĕ. Пăлтĕр парникре 28 рама пулнă, кăçал 128 рама тунă. Тупăш тата нумай пулмалла кăçал.

Хĕллехи сивĕсем иртсенех бригада хĕрÿ ĕçе тухрĕ. Садра çын сулĕш юр выртнă вăхăтра парниксем усрĕç. Халĕ, çак йĕркесене çырнă чухне, парниксенче хăяр ÿссе çитет, арбуз чечекленет, симĕс суханпе хуле çынни илет.

Садпа пахчара вĕçĕмсĕр хĕрÿ ĕç пырет, савăк юрă шăранать. Ĕçпе савăнăç юрри сырма тăрăх ян та ян каять.

Н. ПУШКИН.

Жданов ячĕпе тăракан колхоз, Советски районĕ.

Халăх демократи çĕршывĕсенче

Польшăра художествăллă пултарулăх смотрĕ пулнă

ВАРШАВА, майăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). *Пĕтĕм Польшăри художествăллă пултарулăх коллективĕсен смотрĕ* вĕçленнĕ, ăна Польшăри профсоюзсен Центральнăй Совечĕ организациленĕ.

Смотр çĕршыв пурнăçĕнчи культурăллă пысăк событи пулса тăнă. Смотра драма коллективĕсем нумайăшĕ—*20 пин ытла пĕрлештерсе тăракан 1.200 коллектив хутшăннă. Вĕсем лартнă* спектакльсене курма 5 миллион ытла çын пынă. Спектакльсем лартма Польшăри ку чухнехи авторсем çырнă чи лайăх пьесăсене суйласа илнĕ. Пьесăсенче миршĕн кĕрешнине тата çĕршыв пурнăçĕнчи тĕп ыйтусене: ултă çуллăх плана пурнăçлассишĕн, яла урăхлатса социализмла çĕнтерсишĕн кĕрешнине тата ытти ыйтусене сутатса парассĕ.

Майăн 19-мĕшĕнче юлашки спектакльсем пулнă. Вĕсене художествăллă пултарулăхăн чи лайăх драма коллективĕсем—12 коллектив лартнă. Польшăн государство театрĕнче Чеховице станцийĕнчи (Краков воеводстви) художествăллă пултарулăх коллективĕ *Адам Тарн çырнă «Обычное дело»* пьесăна—Америкăри судсенчи йăласем çинчен каласа кăтартакан пьесăна—лартнă. Спектакль ăнăçлă иртнĕ, ăна курма халăх нумай пуханнă.

Социализмла ăмăртса ĕçлесен анлă сарăлнă

СОФИЯ, майăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарири ĕçсыннисем 1952 çулхи производство планне срокчен тултарассишĕн социализмла ăмăртса ĕçлессĕ. Çĕршыври мĕнпур рабочисенчен 90 проценчĕ ытла ăмăртăва хутшăннă.

Ĕçри хастарлăх ÿснипе пула, промышленность продукцийĕн хисепĕ кăçалхи пĕрремĕш кварталта, 1951 çулхи пĕрремĕш кварталтипе танлаштарсан, 21,5 процент нумайрах пулнă, промышленносри рабочисен ĕç тухăçлăхĕ 17 процент ÿснĕ.

София хулинчи К. Е. Ворошилов ячĕпе тăракан, вайсăр электричество токĕпе ĕçлекен аппаратсем тăвакан завод—малта пыракан предприятисенчен пĕри. Ку завод коллективĕ пĕррмĕш квартал планне 110,6 процент тултарнă. Электрификаци министерствипе Профсоюзсен Центральнăй Совечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне паме тивĕçлĕ пулнă. Ĕç тухăçлăхне ÿстерсе, рабочисем продукцин хăйне хакне чылай йÿнеткĕ, халăх хуçалăхĕ валли 1 миллион лев ытла укçа перекетленĕ. Заводри чылай цехсем çулталăкри производство планне вунă уйăх хушшинче тултарма сăмах панă.

Болгарири ытти заводсен коллективĕсем те çулталăкри плансене срокчен тултарассишĕн ăмăртса ăнăçлă ĕçлессĕ.

Болгарире кĕнеке эрни иртгерессĕ

СОФИЯ, майăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Майăн 18-мĕшĕнче Болгарире кĕнеке эрни пуçланнă.

Çавна май çĕршыври хуласемпе ялсенче болгарсен кĕнекисемпе совет кĕнекисен выставкисене уçнă. 1944 çулхи сентябрĕн 9-мĕшĕнчен—çĕршыва ирĕке кăларнă кунтан пуçласа паянхи куна çитичен Болгари литератури художество тĕлĕшĕнчен паха чылай произведенисемпе, пьесăсемпе тата очерксемпе пуянланнă. Çав произведенисенче Болгари халăхĕ монархиллĕ-фашистла строя хирĕç мĕнле кĕрешни çинчен çырнă, çĕнĕ çынсен—социализмлă ĕç геройĕсен сăнарне кăтартнă.

Юлашки 7 çул хушшинче çĕршывра 14.660 кĕнеке пичетлесе кăларнă, вĕсен пĕтĕм тиражĕ—15 миллион экземпляра яхăн.

Марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсене çултан-çул ытларах та ытларах кăларассĕ. 1944 çултан пуçласа 1950 çулччен Маркс, Энгельс, Ленин тата Сталин произведенийĕсем нумай пичетленсе тухнă, вĕсен пĕтĕм *тиражĕ*—3.614.670 экземпляр. Çав шутра «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» 8 изданипе, пурĕ—265 пин экземпляр пичетлесе кăларнă.

Георгий Димитров, Василь Коларов, Вылко Червенков произведенийĕсене пысăк тиражпа пичетлесе кăларассĕ.

Политикăллă литературăпа социальнăй-экономикăллă литература пичетлесе кăларнипе пĕр вăхăтрах, Болгари классикĕсемпе ют çĕршывсен классикĕсен тата Болгарипе Совет Союзĕнчи халăхсен вăхăтри писательсен произведенийĕсене те пичетлессĕ.

Албани хĕрарăмĕсем çĕнĕ пурнăç тунă çĕрте активлă ĕçлессĕ

ТИРАНА, майăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Албанири Ĕçлĕх партийĕ тата халăх правительстви хĕрарăмсене производствăра активлă ĕçлеме пур майсене те туса пама тăрăшассĕ. Рабочисем пурăнакан тата предприятисен пур центрĕсенче, ялхуçалăх кооперативĕсенче ача яслисемпе сачĕсем, столовăйсем тата ытти çавăн пек учрежденисем уçнă. Промышленносра ĕçлекен хĕрарăмсен йышĕ халĕ 1948 çулхинчен пилĕк хут нумайрах.

Шкодерти тата Дурресри табак фабрикисенче, Шкодерти тата Корчири фабрикăсенче ĕçлекенсем хушшинче хĕрарăмсем 90 процент шутланассĕ. Сталин ячĕпе тăракан нефть комбинатĕнче юлашки çулталăк çурă хушшинче работницăсен шучĕ вицĕ хут ытла ÿснĕ. Мати юханшывĕ çинчи гидростанцие лартнă çĕрте ĕçлеме хĕрарăмсем нумай пынă.

Албани халăх пухăвĕнче

ТИРАНА, майăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Халăх Пухăвĕн чрезвычайнăй сессийĕн ĕнерхипе паянхи ларăвĕсенче Албани халăх хуçалăхне аталантармалли пилĕк çуллăх план (1951—1955 ç. ç.) çинчен çырнă законăн проектне сÿтсе явнă.

Прениле нумай депутатсем—министрсем, рабочисем, хресченсем, писательсем, культурăпа искусство, наука деятелĕсем тата ыттисем те сăмах тухса каланă. Вĕсем хăйсен сăмахĕсенче пилĕк çуллăх планăн пысăк задачисем çинчен тĕплĕн çутатса панă, Ĕçлĕх партийĕпе Энвер Ходжа ертсе пыракан Албани халăхĕн экономикăпа культурăна малалла аталантарса пыма пысăк майсем пурри çинчен, ĕçсыннисем Албанин пĕррмĕш пилĕк çуллăх планне ăнăçлă пурнăçлассишĕн кĕрешме хатĕр пулни çинчен каласа кăтартнă.

Халăх Пухăвĕ паянхи ларура пĕр шухăшлă пулса, Албани Халăх Республикин халăх хуçалăхне аталантармалли пилĕк çуллăх планĕ (1951—1955 ç. ç.) çинчен закон йышăннă.

Мире сыхлас ыйтупа Пĕтĕм Бирмăри конгресс пулса иртнĕ

ПЕКИН, майăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентстви çапла пĕлтерет:

Рангунран илнĕ хыпар тăрăх, майăн 10-мĕшĕпе 12-мĕшĕ хушшинче Рангунра Мире сыхлас ыйтупа Пĕтĕм Бирмăри конгресс иртгернĕ. Конгресра тĕрлĕ районсен тата тĕрлĕ вак халăхсен представителĕсем 400 çын ытла пулнă.

Миршĕн тăракансен Пĕтĕм Бирмăри пĕрлешĕвĕн секретарĕ конгреса уçнă чухне çапла пĕлтернĕ: мире сыхламалли тата Америка агрессине хирĕç кĕрешмелли Китай халăх комитечĕн представителĕ конгреса пырайман, мĕншĕн тесен Гонконгри Англи влаçĕсем ăна тухса килме ирĕк паман. Конгресра пулнисем Англи империалисчĕсем çавăн пек сĕмсĕр ĕçсем тунине хирĕç хытă тарăхса протестленĕ.

Миршĕн тăракансен Пĕтĕм Бирмăри пĕрлешĕвĕн председателĕ Такин Лувн Бирмăра миршĕн кĕрешес ĕç çинчен доклад тунă. Вăл çакна палăртнă: Америка империализмĕ Японие усçăнах хĕçпăшаллантарать, Корейăпа Китайра бактериллĕ вăрçă вăрçать. Такин Лувн Бирмăри мĕнпур çынсене пĕрлешме, мире сыхлассишĕн тăма чĕннĕ.

Конгресра пулнисем нумайăшĕ Бирмăра миршĕн тăракансен юхăмне сарма кирли çинчен каланă, Бирма халăхĕ пĕтĕм тĕнчери мире сыхласа хăварма хатĕр тăнине палăртнă.

Конгресс империалистсем Азире çар базисем тунине хирĕç, Бирмăна паракан империалистла кирек мĕнле «пулăшăва» та йышăнмалла мар тесе резолюцисем йышăннă. Çавăн пекех тата американецсем Японине сепаратнăй «мирлĕ договор» йышăнтарнине хирĕç, Америка империалисчĕсем Корейăра вăрçнине хирĕç тата вĕсем перемири çинчен пыракан калаçусене чарса лартма хăтланнине хирĕç, Америка империалисчĕсем бактериллĕ хĕçпăшалпа вăрçнине хирĕç резолюцисем йышăннă. Йышăннă резолюцисенче çавăн пекех Азипе Вăтам Хĕвелтухăçри колонисенчи тата пăхăнса тăракан çĕршывсенчи халăхсен наци ирĕклĕхшĕн пыракан кĕрешĕвне ырласа кăмăлланине палăртнă. Резолюцисенче атомлă хĕçпăшала чарса лартма требовани лартнă.

Конгресс хупăннă хыççăн тепĕр кунне Рангунра демонстраци пулнă. Ăна конгресс решенийĕсене ырланине палăртас шутпа иртгернĕ.

Швейцарири забастовкăсем

БЕРН, майăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). «Ла Сюисс» хаçат паян çакăн çинчен пĕлтерет: Фрейбург хулинче йывăçран япаласем тăвакан промышленносри рабочисем иртнĕ эрнере забастовка тума тытăннă. Ку забастовка халĕ те чарăнман. Рабочисем ĕç укçи ÿстерме тата çĕнĕрен коллективлă договорсем тума ыйтса требовани лартнă.

Корейăри ĕçсем

Халăх çарĕн главнăй командованийĕ пĕлтерни

ПХЕНЬЯН, майăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕн паянхи *пĕлтерĕвĕнче çапла каланă:* Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсемпе пĕрле пур фронтсенче те Америкăпа Англи интервенчĕсен тата Ли Сын Ман çарĕсен атакисене ăнăçлă сире-сире янă, тăшман салтакĕсемпе офицерĕсене тата техникине нумай пĕтернĕ.

Хĕвеланăçĕнчи фронтра, Корандори районĕнче, тăшманăн пĕр батальон яхăн салтакĕсем Халăх çарĕн позицийĕсене питĕ хытă тапăнса атакăсем тунă. Вĕсене танксем тата авиаци пулăшнă. Вăйлă çапăçусем ултă сехет хушши пынă. Çав çапăçусенче тăшман пысăк сухатусем тусă, каялла чакнă.

Паян Халăх çарĕн зенитнăй артиллери чаçĕсем тата самолетсене хирĕç çапăçакан салтакĕсен *отрячĕсем тăшманăн* пилĕк самолетне персе ÿкернĕ. Çав самолетсем унччен, ытти самолетсемпе пĕрле, *Çурçĕр Корейăри мирлĕ халăх* пурăнакан хуласемпе ялсем çине бомбăсем тискеррĕн пăрахма хутшăннă пулнă.

ПХЕНЬЯН, майăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: Корея Халăх çарĕн соединенийĕсем тата Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсем фронтăн чылай участокĕсенче Англипе Америка интервенчĕсен тата Ли Сын Ман çарĕсем хаяррăн атакăланине ăнăçлă сире-сире янă, тăшман салтакĕсемпе офицерĕсене тата техникине нумай пĕтернĕ.

Паян зенитнăй чаçсем тата самолетсене хирĕç çапăçакан салтаксем тăшманăн икĕ самолетне персе ÿкернĕ, виçĕ самолетне сиенленĕ. Çав самолетсем унччен, ытти самолетсемпе пĕрле, тылри мирлĕ халăх пурăнакан районсене бомбăсем пăрахнă тата пулеметсемпе пенĕ çĕре хутшăннă пулнă.

Грецин Корейăри салтакĕсен пăлхавĕсем

СОФИЯ, майăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Болгари телеграф агентстви Эллас Пресс агентствинчен илнĕ çакăн пек хыпара пĕлтерет: Грецин Корейăра, Америка агрессорĕсем майлă пулса çапăçакан экспедици корпусĕнче пăлхавсем пуçланнă. Америкăн 8-мĕш çарĕн командующийĕ Ван Флитт генерал çавна май Грецин тиц çĕр çинчи çарĕн штаб начальникне Цакалотоса Корейăна пыма чĕннĕ.

Цакалотос Корейăна Греци салтакĕсене, Уолл-стрит капиталисчĕсен пĕчĕк ушкăнĕн интересĕсемшĕн, ирĕклĕхе юратакан Корея халăхĕпе Китай добровольцĕсене хирĕç кĕрешме килĕшмен салтаксене, юн ăшне путарма каять, тесе çырать Эллас Пресс агентстви.

Кăнтăр Корейăра выçлăх

ПХЕНЬЯН, майăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Пхеньянри радио тăрăх çакăн çинчен пĕлтернĕ: Америка империалисчĕсем оккупациленĕ Кăнтăр Корейăра халăх пурнăçĕ кунтан-кун ытларах та ытларах начарланса пырать. Унта лисынмановецсем сутăнчăкла политика тытса пынă пирки халăх пурнăçĕ начарланать.

Сеул урамĕсенче выçса вилнĕ çынсен виллисем выртассĕ.

Выçăпа аптăранă халăх влаçсене хирĕç восстанисем тăвать, апат-çимĕç складĕсене тапăнать. Чичивон хули патĕнче пурăнакан хресченсем муниципалитет канцелярийĕпе апат-çимĕç складне аркатса тăкнă. Кăнтăр Чолла провинцийĕнче хресченсем апат-çимĕç складне тапăннă.

Америка диверсанчĕсем Демократилле Корея Халăх Республикин территорийĕнчи çăлсене наркамăш яраççĕ

ПХЕНЬЯН, майăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Пхеньянри радио çакăн çинчен пĕлтернĕ: апрелĕн 17-мĕшĕнче Демократиллĕ Корея Халăх Республикин шалти ĕçсен министерствин сотрудникĕсем Хванчжу уездĕнче Ли Ман Дык ятлă 25 çулхи хĕрарăма тата О Чэ Тхяк ятлă 14 çулхи çамрăка тытнă. Вĕсем хăйсем Америка шпионĕсем пулнине йышăннă. Вĕсем иккĕшĕ те Сеулта шпионла ĕçсем тума вĕрентекен, Америка офицерĕсем ертсе пыракан ултă уйăхлăх курсран вĕренсе тухнă. Вĕсене иккĕшне те Америка самолечĕсем февралĕн 25-мĕшĕнче Дярен уездне антарса хăварнă. Америка офицерĕ вĕсене бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курни мĕнле сиен кÿнине пĕлме тата Корея Халăх çарĕпе Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсем ăçта тăнине пĕлме задани панă. Кунсăр пуçне вĕсене, Çурçĕр Корейăри халăха тата çар çыннисене ушкăнĕ-ушкăнĕпе вĕлерсе пĕтерес шутпа, çăлсене наркăмăш яма хушнă.

Тытса хупнă çынсем хăйсем Дяренпа Пхеньян хушшинчи районта ĕçленине, çăлсене икĕ хутчен наркăмăш янине йышăннă.

Трансиорданири влаçсен законсăр ĕçсене хирĕç

ТЕЛЬ-АВИВ, майăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). «Кол Гаам» тата «Ал гамишмар» хаçатсем, Трансиорданирен илнĕ хыпар тесе, çакăн çинчен пĕлтерессĕ: Амманри (Трансиордани столици) тĕрмере ларакан 25 коммунист хăйсене влаçсем сутсăр-мĕнсĕрех нумай вăхăт хушши тĕрмере хупса усранине хирĕç протестлеме тытăннă. Вĕсем иртнĕ эрнере выçă пурăнма тытăннă, апат йышăнма пăрахнă.

Тĕнчери общественность Америка агрессорĕсен тискер ĕçсене хирĕç протестлет

Болгари

СОФИЯ, майăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Америка империалисчĕсем Кочжедо утравĕ çинче тыткăнри çар çыннисен юнне тăкнине, çав çынсене хытă хĕсĕрленине хирĕç Болгари хаçачĕсемпе общественность протестлессĕ.

«Вечерни новини» хаçат çапла çырать: Америка империалисчĕсем Корейăпа Китайăн тыткăнри çар çыннисене питĕ хытă хĕсĕрлессĕ, питĕ тискер ĕçсем тăвассĕ. Ку вăл сăмахран, Кăнтăр Корейăри Кочжедо утравĕ çинчи тыткăнри çар çыннисен пурнăçĕ мĕнле пулнинчен курăнать. Американецсем нихçанхинчен хăрушă тискер ĕçсем туни çинчен, вĕсем Женевăра йышăннă конвенцие (килĕшĕве) пурнăçламанни çинчен халĕ ĕнтĕ пĕтĕм тĕнче пĕлчĕ. Америка империалисчĕсем çынсене асаплантарассĕ, хăйсем тыткăнри çар çыннисене тискеррĕн хĕсĕрленине сĕмсĕррĕн йышăнмасăр, тăрăсçĕ тата хăйсем «этемлĕхе хисеплени» çинчен пĕтĕм тĕнчене илтĕнмелле шавлассĕ. Çакăн пирки мĕнпур çĕршывсенчи тÿрĕ кăмăллă çынсем чунтан-чĕререн тарăхрĕç.

Колсон генерал влаçсем ирсĕр ĕçсем тунине йышăнни Америка империалисчĕсен тискер сăн-сăпатне уçса кăтартать. Вăл йышăнни ĕнтĕ Корейăри калаçусем мĕншĕн вунă уйăх ытла тăсăлнине тата çар çыннисене каялла ярас пирки мĕншĕн килĕшÿ тума май килменнине лайăхрах ăнланса илме пулăшать. Америка империалисчĕсем Корейăпа Китайăн тыткăна лекнĕ çар çыннисене хăйсен тăван çĕршывне каялла ярасшăн мар, вĕсене чуралăха кĕртсе ÿкернине законлă йĕрке евĕрлĕ тума тăрăшассĕ.

Империалистсем халăхсен шухăш-ĕмĕтне хисеплемесен, перемири çинчен пыракан калаçусене чарса лартсан, Корея халăхĕ интервентсене çапса аркатĕ, хăйĕн çĕрне интервентсенчен хăтарĕ, тыткăнри çар çыннисене хăйсен тăван килĕсене таврăнма пулăшĕ, тесе çырать юлашкинчен хаçат.

Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн членĕ Людмил Стоянов академик çапла çырать:

Кочжедо утравĕ çинчи концентрационнăй лагерьте *ним айăпсăр çынсене* асаплантарассĕ. Тыткăнри пиншер çар çыннисем тата пиншер мирлĕ граждансем çинче химиллĕ хĕçпăшалпа бактериллĕ хĕçпăшала сăнаса тĕрĕслессĕ тата ытти тискер сăнавсене тăвассĕ. Тыткăнри çар çыннисене хăйĕн ирĕкĕпе каялла тăван çĕршывне таврăнма килĕшменни çинчен çырнă çырусем çине, тыткăнри çар çыннисем хăйсен тăван çĕршывне, хăйсен тăванĕсем патне каялла таврăнасшăн мар тесе суйса çырнă заявленисем çине ирĕксĕрлесех, юнпа алă пустарассĕ.

Додд генералпа тата Колсон генералпа пулнă ĕç Америка çар çыннисен питĕ тискер ĕçсене пĕтĕмпех тăрă шыв çине кăларчĕ, çакă Вашингтонри правительсене намăслантарчĕ, вĕсем тарăхса кайрĕç. Америка интервенчĕсем Корейăра халиччен истори пĕлнĕ мĕнпур тискер ĕçсенчен те хаяртарах усал ĕç тунине халĕ пĕтĕм тĕнче пĕлет.

Тыткăнри çар çыннисем хăйсемех Америка çарĕн командованине вăйлăн çапрĕç, çав сасă пĕтĕм тĕнчене илтĕнчĕ, тесе çырать юлашкинчен Людмил Стоянов.

СОФИЯ, майăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăн çар мундирĕсем тăхăннă палачĕсем Кочжедо утравĕ çинчи тыткăнри çар çыннисене тискеррĕн хĕсĕрлени тата чылай çынсене вĕлерни Болгари халăхне тарăхтарнă.

«Работническо дело» хаçат Социализмлă Ĕç Геройĕ Донка Панаетова çырнă заявление пичетлесе кăларнă. Вăл çапла çырать: Америка варварĕсем Кăнтăр Корейăри Кочжедо утравĕ çинче тыткăнри, хăйсене хÿтĕлеймен çар çыннисене хирĕç питĕ тискер ĕçсем туни çинчен пĕлсен, эпĕ хытă тарăхрăм. Америка империалисчĕсем тыткăнри çар çыннисем тĕлĕшпе питĕ тискер ĕçсем тăвассĕ, Корея халăхне парăнтарма хăтланассĕ. Анчах Америкăри çынçиенсĕм шухăшлани йăнăш пулчĕ. Корейăн паттăр халăхĕ, Китай халăх добровольцĕсемпе пĕрле, хăйсен çĕрĕ çинчен Америка интервенчĕсене хăваласа ярĕ.

Румыни

БУХАРЕСТ, майăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Америка агрессорĕсем Корейăра тискер ĕçсем тунине хирĕç Румыни общественносĕ питĕ тарăхса протестлет.

«Ромыниа либера» хаçат çапла çырать: тыткăнри çар çыннисен Кочжедо утравĕ çинчи лагерĕнче пулнă юнлă ĕçсене тĕнчери общественность тимлĕ сÿтсе явать. Тыткăнри çар çыннисене калама çук хытă хĕсĕрлени тата вĕсен юнне тăкни Америкăн империалистла преступникĕсен питĕ тискер сăн-сăпатне тата тепĕр хутчен тата пĕтĕмпех тăрă шыв çине кăларчĕ. Перемири çинчен пыракан калаçусене пăчлантарса лартма тăрăшса, Америка агрессорĕсем вăрă-хурахла меслетсемпе вăрçассĕ.

Кочжедо утравĕ çинчи тыткăнри çар çыннисен хăрушă сассине пĕтĕм этемлĕх илтрĕ. Империалистсем çакăн çинчен ан манччăр: Америка çар преступникĕсене, мирлĕ çынсем пĕлсе Корея çĕрне шăварakanсене, халăхсем нихçан та каçармĕç! Кочжедо утравĕ вăл çĕнĕ Майданек. Кочжедо утравĕ вăл çар преступникĕсене, чумапа холера чирĕ саракансене айăпласа çырнă, этемлĕхĕн чи хаяр тăшманĕсем пулса тăракан Америка империалисчĕсене айăпласа çырнă заключени çĕнĕ тата питĕ хаяр статьи пулса тăрать.

Мире юратакан мĕнпур халăхсемпе пĕрле Румыни халăхĕ Америка интервенчĕсем Кочжедо утравĕ çинче вăрă-хурахла ĕçсем тăвассине халех чарса лартма, тыткăнри çынсем çине этемле пăхмалла йĕрке туса хума, тыткăнри çар çыннисен лагерĕсенче çынсене вĕлерессине организациленисене айăпласа пысăк наказани пама, Корея çĕрĕ çинче вилĕм саракансене пурне те наказани пама ыйтать.

БУХАРЕСТ, майăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Америка çар çыннисем Кочжедо утравĕ çинче çав тери тискер преступленисем тунă пирки Румынири общественность хытă тарăхнă. Çĕршыври предприятисенче çав тискерлĕхсене хирĕç протестлеме пысăк пухусемпе митингсем иртгерессĕ. Пухусемпе митингсенче ĕçсыннисем Америка агрессорĕсене хытă намăслантарса питлессĕ, Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕнчен Америкăн Корейăри тискер ĕçĕсене чарса лартма ыйтса требованисем кăларса тăратассĕ. Бухарестри «Динамо», «Вулкан» заводсенчи, Г. Георгиу-Деж ячĕпе тăракан фабрикăри тата ытти предприятисенчи рабочисемпе служащисем ĕнер пулнă митингсенче Пĕрлешнĕ Нацисен Организацине телеграммăсем яма йышăннă. Çав телеграммăсенче вĕсем Америка интервенчĕсен тискер ĕçĕсене—Кочжедо утравĕ çинче тыткăнри çар çыннисене вĕлернине тата хĕсĕрленине хирĕç протестлессĕ.

Пур хаçатсем те производствăра, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен, наука, литература тата искусство деятелĕсен нумай çырăвĕсене пичетлессĕ. Ку çырусенче Румыни халăхĕ Америка империалисчĕсен тискерлĕхне хирĕç тарăхса протестлени çинчен каласа панă.

Польша

ВАРШАВА, майăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Тыткăнри çар çыннисен Кочжедо утравĕ çинчи лагерĕсенче Америка варварĕсем питĕ тискер ĕçсем тунине Польша халăхĕ питлет. «Жолнеж вольности» хаçат «Американецсен Кочжедо утравĕ çинчи террорпа вилĕм йĕрки» ятлă статьяра çапла çырать:

«Америка сынвĕлеренĕсем Кочжедо утравĕ çинче тыткăнри, хăйсем хÿтĕленме пултарайман çар çыннисене хирĕç тунă преступленисем пĕтĕм тĕнчери халăха çĕнĕрен питĕ хытă тарăхтарчĕç. Тÿрĕ кăмăллă мĕнпур этемлĕх тыткăнри çар çыннисене тискеррĕн вĕлерессине чарса лартма ыйтать».

Голланди

ГААГА, майăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Америка агрессорĕсем Кочжедо утравĕ çинче тыткăнри çар çыннисене çав тери тискеррĕн хĕсĕрленине тата вĕлернине хирĕç Голландири ĕçсыннисем хытă протестлессĕ. Çĕршыври тĕрлĕ вырăнсенче çав тискер ĕçсене хирĕç протестлемелли митингсемпе пухусем пулнă, вĕсенче Америкăн çар мундирĕсем тăхăннă çынçиенĕсем тискер ĕçсем тунине питленĕ.

Эйндховенра пулнă митингра йышăннă резолюцире çапла каланă: «Этем сăнсăпатне сухатнă американецсем калама çук тискер преступленисем турĕç—бактериллĕ вăрçă пуçарчĕç, хăйсене хÿтĕлеймен çынсене, тыткăнри çар çыннисене ним хĕрхенмесĕр асаплантарассĕ. Америкăн иртĕхнĕ тискер вăрă-хурахĕсене тытса чарма пĕтĕм этемлĕхĕн пĕрлешсе пулать».

Америка агрессорĕсем тыткăнри çар çыннисен лагерĕсенче çĕнĕрен тискер ĕçсем тăвассĕ

НЬЮ-ЙОРК, майăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Пусан хулинчен Юнайтед Пресс агентствин корреспонденчĕ Меррик çапла пĕлтерет: Америкăн 8-мĕш çарĕн командованийĕн представителĕсем корреспондентсене тыткăнри çар çыннисен Пусанри лагерĕсен районне пырса çÿреме чарнă. Корреспондентсене пырса çÿреме чарасси çинчен приказ кăларнă, çав приказ корреспондентсене Кочжедо утравĕ çинче çак уйăхăн пуçламăшĕнчи событисем пулса иртнĕ вăхăтра, пырса çÿреме чарнă приказа аса илтерет, тесе калать Меррик. Меррик пĕлтернĕ хыпар та ĕнер вĕлернĕ тыткăнри çар çынни алăпа немелле граната сурăлнă пирки вилни çинчен каланă. Çав гранатăсем «сурăлнă чухне взрыв пайăн пулмасть, вĕсен тимĕртен тунă сийĕ çук, çапла вара, вĕсем сурăлсан та ытти гранатăсем сурăлнă чухнехи пек осколоксем пулмассĕ», тесе çырать Меррик.

Нигерири салтаксен пăлхавĕ

ПАРИЖ, майăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентствин корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Англин Африкăри колонийĕнче—Нигерире, Лаго хулинчи çар мастерскойĕнче майăн 19-мĕшĕнче 400 салтак-негр çыннисем влаçсене хирĕç пăлхав пуçарнă.

Салтаксем пурнăç условийĕсем начар, апат-çимĕç илĕх пирки тата салтаксен шалу укçийĕсене нумай тытса юлнине хирĕç протестлессĕ.

Агиткультбригада колхозсенче

ЕЛЧĔК. ВЛКСМ райкомĕпе районти культура çуртĕ çурхи ĕçсем вăхăтĕнче колхозниксен культурăллă канăвне йĕркелес тĕлĕшпе агиткультбригада организацилерĕç.

Агиткультбригада çак кунсенче Пĕрлешÿ ячĕпе тата Свердлов ячĕпе тăракан колхозсенче пулчĕ. ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ П. Михайлов юлташ çамрăк колхозниксем валли «Тусăлăхпа юлташлăх» темăпа тăрăх лекци вуласа пачĕ. Уй кыççăн агиткультбригада членĕсем вырăс, чăваш совет композиторĕсем çырнă юррисенчен тата халăх ташшисенчен йĕркеленĕ концерт пачĕç.

Колхозниксем агиткультбригада членĕсене йышăнса йышăнчĕç, колхозсенче матăрах пулма, культурăллă-массăллă ĕçе анлă туса пыма сĕнÿ пачĕç.

Бригада членĕсем тата темиçе колхозра пулассĕ.

Улма-çырла питомникĕнче

ÇĔРПУ. Улма-çырла питомникĕ çулсерен ÿсе сарăлса пырать. Унта *тĕрлĕ сортлă улма-çырла йывăççисем* ĕрчетессĕ. Çырласем сутса кашни çулах вуншар пин тенкĕлĕх тупăш илессĕ. Кăçал питомника тата 9 гектара яхăн сарнă.

Питомник умне кашни куна вуншар автомашинăсемпе *лавсем пырса чарăнассĕ.* Кунта республикăри колхозсенчен, шкулсенчен, предприятисемпе учрежденисенчен улма-çырла йывăççисем илме килессĕ.

Питомник çак суркунне 8 пин тĕп крыжовник, 11 пин тĕп хăмла çырли, *6.300 тĕп тополь, 3.200 тĕп хурлăхан,* 2.600 тĕп мичуринла сортлă чие çырли сутнă. *Улма-çырла йывăççисене* Вăрмар, Сĕнтĕрвăрри, Чурачăк, Шăхасан, Канаш, Вăрнар тата ытти районсенчи нумай колхозсем туяннă.

* * *

Сталин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артель членĕсем уй-хирсене шăрăхран сыхлама вăрман тăрăхĕсем тăвассĕ. Вĕсем çулсеренех Çĕрпÿри улма-çырла питомникĕнчен тата вăрман хуçалăхĕнчен тĕрлĕрен йывăççем илсе лартассĕ.

Кăçал çырма-çатрасем ишĕлесрен уйсене хыр, тополь тата вĕрене 25 пин тĕп *лартса хăварчĕç.*

Халĕ колхозăн вăрман тăрăхĕсем 10 гектар ытла шутланассĕ.

В. АЛЕКСЕЕВ.

Вăрман питомникĕ

КОМСОМОЛЬСКИ. Пĕрлешсе пысăкланнă «Гигант» колхоз хирĕсенче хире хÿтĕлемелли вăрман тăрăхĕсем тăвас ĕç сарăлсах пырать.

Иртнĕ çулсенче колхоз лартмалли йывăççем сутăн илсе укçа нумай тăкакланă. Халĕ кунта вăрман тăрăхĕсем тума питомник тунă. Кăçалхи суркунне питомника 10.000 тĕп тополь лартнă. Халĕ тата 10.000 тĕп лартассĕ. Ку ĕçе тума ятарласа звено тунă.

С. СИДОРОВ.

Смотра хатĕрленессĕ

Шăхасан районĕнчи Ушанарти çичĕ çул вĕренмелли шкулта вĕрентекенсем ВЦСПС секретариачĕпе СССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи искусство ĕçĕсен комитечĕ иртгерекен харпăр хăй тĕллĕн вĕреннĕ художниксен смотрне хатĕрленессĕ. Çак кунсенче кунта çамрăк художниксен пултарулăхне кăтартас шутпа смотр пулчĕ. Унта П. Николаевăн «Пăр çинче», В. Григорьевăн «Шкул», А. Николаевăн «Шкул садĕнче» тата А. Кириллов ÿкернĕ картинăсене пысăк хак пачĕç. Халĕ çамрăк художниксем çĕнĕ картинăсем ÿкерессĕ.

Г. ЛУЧ.

Атăл çинче

Сумăр сунă хыççăн хĕвеллĕ ăшă кунсем çитрĕç. Тÿлек çанталăкра Атăл шывĕ йăлтăртатса тăнă пекех курăнать. Улăхри, утравсем çинчи йывăççем симĕсленчĕç.

Пăрахутсем, баржăсем, сулăсем час-часах иртессĕ. Атăл лĕш енче—Шупашкар тĕлĕнчи затон патĕнче тата Криуш кÿлли сывăхĕнче тунă сулăсене бокстов вĕтерне. Хĕлле касса хатĕрленĕ йывăçа Атăл тăрăх юхтарса каяççĕ, коммунизмăн аслă стройкисене тунă çĕре вăхăтра илсе çитерессĕ.

Атăл шывĕ чакса пырать. Иртнĕ талăкра 34 сантиметр, чакма пуçланăранпа (майăн 14-мĕшĕнче чакма пуçлани)—159 сантиметр чакнă.

Атăл урлă каçаракан пăрахутсем йĕркеллĕ ĕçлессĕ. «Ударник Потапов» çулахи пристань вырăнĕнчен тăварах, «20 лет ЧАССР» пăрахут—торфопредприяти посеклĕнĕ тĕлне каçарассĕ.

Редактор В. А. ЯКОВЛЕВ.

„РОДИНА“ КИНОТЕАТРТА

Паян, майăн 23-мĕшĕнче, кăтăрлăхи сеанссене илемлĕ фильм

„Тринадцать“

Сеансем 12 тата 14 сехетре пуçланаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 8, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—3-74, информаци пайĕ—3-74, парти пурнăç пайĕ—4-17, ялхуçалăх пайĕ—3-97, пропаганда пайĕ—3-61, культура пайĕ—3-61, совет строительстви пайĕ—3-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01352 Типографи № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.